Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пĕр №-рĕ 10 пус 19-мĕш çул тухать

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937
НОЙАБĔР
18
КĔÇНЕРНИКУН
264 (4776)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Кандидатшăн бољшевикла агитацилесси

Пирĕн çĕршыв суйлав кампанин татăклă тапхăрне кĕчĕ. Хуласемпе йалсенче, ĕçсыннисен пухувĕсем депутата суйлама палăртнă, округсенчи суйлав умĕнхи совешчанисем йышăннă тата округсенчи суйлав комиççисем регистрацилен̆ĕ кандидатсемшĕн бољшевикла агитаци саралса пырать.

Суйлав кампанинчи организацилĕ тата агитацилĕ-пропагандăлă ĕç суйлав участкисене куçать. Кунта хăйĕн сарăмлăхĕпе пит анлă, идейă тĕлĕшпе пит тĕплĕ агитацилĕ-ăнлантару ĕçне сарса йарас пулать. Кунта округсенчи суйлав умĕнхи совешчанисем суйланă **довереннăйсен хĕрӳлĕ** ĕçлемеле. Довереннăйсем çине—партири тата партире тăман бољшевиксем çине—хисеплĕ те ответлă задачă хунă: вăл—палăртнă кандидата депутата суйлассишĕн агитацилесси.

Довереннăй — нумай пин ĕççыннисен уполномоченнăйĕ пулса тăрать. Сталин йулташ халăх шанчăкне хакла хума вĕрентет. Суйлавçăсем ун çине шанчăк хунă çынăн çав шанчăка тивĕçлĕ пулмала ĕçлес пулать.

Довереннăйăн полномочине илнĕ партири тата партире тăман бољшевикăн ăнланса илес пулать: унăн задачи—участкăри суйлавçăсем **пурте** хăйсен сасне çак округра регистрацилен̆ĕ кандидатшăн памала тăвасси. Сталин йулташ суйлав кампанинче ĕç хăй тĕллĕнех пуласса шанма йураманни çинчен тата „мĕн кирли пурте административлă распорйаженисен йĕркипе хатĕр пулса тăрасса кĕтсе лармала мар“ тесе асăрхаттарнине асрах тытас пулать. Регистрацилен̆ĕ кашни кандидатшăн тимлĕн агитацилес пулать. Кандидатăн пурнăçĕ çинчен, унăн социалисăмла тăван çĕршывшăн тăрăшса тунă ĕçĕсем çинчен кашни суйлавçăна каласа парас пулать.

Депутата суйламали кандидатшăн агитацилессине совет влаçĕ иртнĕ çирĕм çул хушшинче тунă çитĕнӳсене кăтартса парассипе çыхăнтарса туса пырас пулать. Совет халăхĕ коммуниссен партийĕ йертсе пынипе социалисăм строителствинче пур йенпе те тунă пит пысăк çĕнтерӳсене, çав çĕнтерӳсен ĕнентерекен тата сута цифăрсене кура кашни суйлавçă унăн влаçĕн Аслă органне Ленин—Сталин ĕçĕшĕн тӳрĕ кăмăлпа, пĕтĕм вăй-хăватпа, вĕсне çитийех тăракан çынна çеç суйламалине ĕненĕ. Суйлав участкинчи агитаци-политикă тĕлĕшпе пĕртĕллевлĕ, суйлавçăсем пурте ăнланмала, суйлавçăсем латне çитмеле пулни кирлĕ. Кунтан довереннăйăн задачи тухса тăрать: унăн—агитаци **пахалăхне** тĕрĕслемеле, агитаци бољшевикла пултăр тесе сăнаса тăмала, тăшманла елементсем хирĕçле ĕçлени кăшт палăрсан та пĕтерсе пымала.

Довереннăйăн агитацилĕ пĕтĕм ĕçе çакăн пек йĕркелесе йамала—**суйлавçăсем пурте сасăламали** йĕркене, вĕсене „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени“ панă правасене лайăх пĕлсе тăччăр.

Довереннăйсен ĕçĕшĕн, хăйĕн территоринчи пĕтĕм организацилĕ тата агитацилĕ-пропагандисла ĕçшĕн пекех, партин районри комитечĕ ответлă пулса тăрать. Шел те, райкомсем нумайĕшĕ çак ответлăха, суйлав кампанинчи хăйсен задачине ăнланса илмен-ха. Иваново хулинчи Сталински районра довереннăйсен хисепне çак ĕçе тума çителĕклĕ таран йурăхлă мар çынсем лекнĕ. Довереннăйсене пĕрре те пухман, вĕсене хăйсен задачисем çинчен ăнлантарса паман, райкомсем те сахал мар-ха. Довереннăйсем çук суйлав участкисем те пур. Куйбышев хулинчи Молотовски районра суйлав участкинче йулашки кунсемчченех довереннăйсем пулман. Ку тĕлĕшпе райком тĕлĕнмеле тимсĕр. Тула хулинче довереннăйсем халĕ те ĕçе тытăнман. Ашхабад хулинчи парторганизацисем общественнăç шанчăк хунă çынсем çине мĕнле пăхни—ытла пит йурăхсăр. Унта, докладчик—округри суйлав комиççин председателĕ Лапин йулташ пухува пыман пирки довереннăйсен пухувĕ пулаймасăрах саланнă.

Суйлав тавра организацилĕ тата агитацилĕ-пропагандăлă ĕçсене чи паха туса пырасси, суйлав участкинче ĕçлеме районри партири тата партире тăман бољшевиксене уйăрасси, участкăна литературă, плакатсем, лозунгсем парасси — кашни райкомăн кĕрешӳлĕ задачи пулса тăрать. Пуçламĕш парторганзацисем суйлав кампанине мĕнле хутшăннине, вĕсем довереннăйсене мĕнле пулăшу панине райкомсен кулленех тĕрĕслесе пырас пулать. Мĕншĕн тесен вăл çынсем—довереннăйсем — пуçламĕш парторганизацисем пулăшса пырсан, партири тата партире тăман актив çине тайансан çеç ăнăçлă ĕçлесе пыма пултараççĕ. Çавăн пек актива суйласа тупасси—пысăк ĕç. Ăнсăртран лекнĕ, тĕрĕслемен çынсем усăран ытла сийен кӳме пултараççĕ.

Халĕ те-ха довереннăйсен ĕçне организацилеме тытăнман райкомсене, Мускав хулинчи Сталински райкомĕн опытне сĕнме пулать, унта довереннăйсем тăхçанах агитаци ĕçне тума тытăннă. Çак иртнĕ кунсенче вăл районра довереннăйсен совешчанийĕ пулнă, совешчанире районра пысăк ĕç сарса йани курăннă. Довереннăйсем ĕнтĕ вуншар калаçусем тата митингсем туса ирттернĕ. Суйлав участкисенче агитпунктсем организациленĕ, унта суйлавçă хăй ăнланман ыйтусем пирки тĕплĕ ответ илме пултарать.

Довереннăйа суйланă Галина Скулович Ленински суйлав округĕн кандидачĕшĕн —Гудов йулташшăн акă мĕнле агитацилет. Вăл хăйсен суйлав участкинчи пĕр çуртра пурăнакансене пухнă. Гудовшăн агитаци тума вăл Совет Сойузĕн ӳсĕмĕ çинчен, пирĕн партин çĕршывăн аталанăвĕнчи ролĕ çинчен каласа парса пуçласа йанă. Вара çав хушăрах вăл иртнĕ вăхăтра чернорабочи пулнă — парти пăхса ӳстернĕ, халĕ мухтавлă стахановец-фрезеровщик Гудов çинчен каласа панă.

Мускав хулинчи Пролетарски районра уйрăм суйлав участкисем „Динамо“ заводăн хаçачĕпе пĕрле йатарласах листовкăсем кăларса, Пролетарски суйлав округĕн кандидачĕ Пичугина йулташ çинчен суйлавçăсене каласа параççĕ.

Хаçатсем, листовкăсем, кинофиљмсем, радио—çак майсемпе пуринпе те депутата суйлама палăртнă кандидатпа суйлавçăсене паллаштарма, ССР Сойузĕн пулас суйлавăн политикăла пит пысăк пахалăхĕ çинчен ăнлантарса пама усă курас пулать.

Довереннăй ĕçĕ — общественăшăн пит паха политикăлă ĕç. Райкомсен, райсоветсен довереннăйсем тĕлĕшпе пит тимлĕ пулас пулать. Райкомсен довереннăйсен ĕçĕсене тĕрĕслемеле, вĕсене пулăшмала. Квалификацилĕ докладчиксене докладсем тутарса, довереннăйсене ваљљи семинарсем ирттерекен райкомсем ырă ĕç тăваççĕ. Кашни райкомăн суйлав участкинче ĕçсем мĕнле пулса пынине лайăхрах пĕлсе тăма, тăшманла агитаци кăшт палăрсанах ун çинчен пĕлме довереннăйсен информацийĕпе усă курас пулать.

Суйлав участкинче организацилĕ тата агитацилĕ-пропагандăлă ĕçсене анлăн туса пынинчен суйлав ăнăçлăхĕ килет. Довереннăйăн участкăри ĕçĕнчен суйлавçăсем хăйсен кандидатне пĕлсе тăрасси килет. Довереннăйăн обйазаннăçĕ — участкăра партири тата партире тăман массăсен çыхăнуне çирĕплетесси. Довереннăй хăватлăн тата сарлакан ĕçлесе пынинчен суйлавçăсем çĕр процентĕпех суйлава пырасси килет.

Довереннăйа суйлав участкинне хăйсен округĕнчи кандидатшăн бољшевикла агитаци сарса йама пулăшасси — кашни райкомăн хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать. Кашни довереннăйăн хисеплĕ ĕçĕ—участкăри суйлавçăсен массине округри суйлав комиççийĕ регистрацилен̆ĕ кандидатшăн, тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕшĕн, социалисăмшăн çирĕп кĕрешекен борецшăн пурте пĕр шухăшлă пулса сасăлама пĕтĕçтересси пулать.

(„Правда“ умстатйи).

Совет Сойузĕ тăрăх

★ **Нефт — Инçет-Хĕвелтухăçĕнче.** Нефт институчĕн експедицийĕ Айано-Майский районта (Инçет-Хĕвелтухăçĕ) çăрадса тăракан нефт вырăнĕ тупнă. Çак районта çитес çулăн пуçламăшĕнче разведкăлă ĕçсем пуçланаççĕ.

★ **Çĕр чĕтрени.** Нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче Сталинабадра çĕр чĕтренĕ. Çĕр чĕтренĕ вăхăтра çынсем урама чупса тухнă. Çĕр чĕтренипе хăшпĕр суртсен стенисем çуралнă, чӳречесем çĕмрĕлнĕ, штукатуркăсем ишĕлнĕ. Обсерваторинчи астрономилĕ сехет йанăш çӳреме пуçланă. Çĕр чĕтрени 5—6 балл вăйлĕ пулнă.

Çак кунах Ташкентра та 4 балл вăйлĕ çĕр чĕтренĕ. Полиграфи комбиначĕн çурчĕ темиçе çĕртен çуралнă.

★ **Мускав ваљљи 65 мĕлйун мандарин.** Нойабĕрпе декабĕр уйăхĕсенче Абхазипе Аджаристанран Мускава 65 мĕлйун мандарин илсе пымала. Мандаринсем тийенĕ чылай вагонсем халь çул çинче пыраççĕ.

★ **Йалхуçалăх выставки.** Сталинабадра йалхуçалăх выставки уçăлнă. Виçĕ лайăх йĕркелесе хатĕрленĕ павиљйонта республикă çĕрмамăк тăвас ĕçре тунă çитĕнӳсене кăтартнă. Таджикистанра йулашки 11 çул хушшинче çĕрмамăк тухăçлăхĕ 12 хут ӳснĕ.

★ **Уралти сивĕсем.** Свердловскра 20 градуслă сивĕ çанталăк тăрать. Анат Тагилре сывлăшри температурă 23 градус сивĕ.

★ **Оборонă промышленнăç предприйатийĕсенчи стахановла уйăхçурлăх.** Сталин тата Павшински йачĕсемпе тăракан механически заводсенчи рабочисем, инженерсем тата служăщисем оборонă промышленнăçĕнчи рабочисене нойабĕрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа стахановла уйăхçурлăх туса ирттерме чĕннĕ. Малта пыракан заводсен пуçарулăхне Оборонă промышленнăç халăх комиссариачĕ ырланă.

Национаљнăçсен Советне суйлама палăртнă кандидат

ТАМАРА АЛЕКСЕЙЕВНА МОИСЕЙЕВА

УЛАТĂР СУЙЛАВ ОКРУГĔ

Тамара Алексейевна Моисейева й-ш Улатăрти паровозсене йусакан заводра икĕ çула йахăн ĕçлет ĕнтĕ. Вăхăт нумай мар, анчах Моисейева йулташ çак икĕ çул хушшинчех токарнăй-механически цехĕн чи лайăх бригадирĕ пулма ĕлкĕрнĕ. Вăл, икĕ çул кайала шкулта тăрăшса вĕреннĕ пекех, халь производствăра та пĕтĕм чунне парса ĕçлет.

Унăн социалисăмла производствăн командирĕ пулаччĕнхи пурнăçĕ вĕреьӳре иртнĕ. Малтан çичĕ çул вĕренмели шкулта вĕреннĕ. Унтан вĕренсе тухсан, вăл, паровозсемпе питĕ интересленекенскер, Улатăрти транспортнăй техникума вĕренме кĕнĕ. Çакăнта хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртме пуçланă.

Моисейева йулташ халĕ те лайăх астăвать: малтанхи уроках паровоз çинчен пулнă. Преподавател паровоза мĕнле туни çинчен, вăл мĕнле пайсенчен тытăнса тăни çинчен тата мĕнле ĕçлени çинчен каласа кăтартнă чухне Тамара пĕр самахне сиктермесĕр итлесе ларнă. Вайлă машин ăна парăннă çĕмĕн парăннă пек туйăннă.

Кĕçех практикăлă ĕç пуçланать. Унччен нумайрах пĕлӳ илме тăрăшмала. Пĕлӳ производствăра лайăхрах ĕçлеме пулăшать. Моисейева йулташ çакна лайăх ăнланнă.

Зачотсене парса пĕтернĕ хыççăн, техникумра пысăк савăнăç вечерĕ пулнă. Çак вечĕрта техникум директăрĕ вĕренсе тухнисен спискине вуласа кăтартнă. Ытисемпе пĕрлех Тамара Моисейевăна та паровозсене йусанă çĕрте ĕçлеме техник йатне панă.

Пурте савăннă, хумханнă. Хăйсене хăйсем пурнăçа кĕнĕн туйăннă. Социалисăм строителствинче ĕçлеме специаљнăç илнĕ. Çамрăк специалиссене преподавателсем те, хăйсен тусĕсемпе тăванĕсем те саламланă. Хавасла музыкă хавхалантарса тăнă. Çапла кăларса йанă çамрăк специалиссене пурнăçăн варăм çулĕ тăрăх утма.

Акă ентĕ производствă, паровозсене йусакан завод. Кунта тин çеç вĕренӳрен килнĕ çамрăк Тамарана токарнăй-механически цехĕн бригадирĕ туса хунă. Кантăрла ĕçлет, каçхине вăл, техникумра илнĕ пĕлӳсене пысăклатсах пырас шутпа, хăй тĕллĕн вĕренет.

Заводра кашни çын, пуринчен ытла руководителĕн ĕçе типтерлĕ те хăвăрт тумала. Тамара малтанхи кунсенчех çакна туйса илнĕ: пĕтĕм пĕлĕвне, пĕтĕм вăйне ĕçе кӳлнĕ. Хăйĕн участкинче ĕç тикĕс, пĕр чарăнусăр йухса пытăр, тенĕ. Вăл тухăçлă ĕçе пăхса савăннă. Ĕç ăна мухтава кăларнă. Вăл кĕске вăхăтрах Улатăрти паровозсем йусакан заводра чи лайăх бригадир-стахановец йатне илнĕ.

Вăл производствăра тăрăшса ĕçленĕ пекех, обществолă ĕçсенче те хăйне лайăх палăртнă. Ăна, активлă комсомолкăна, комсомол организацийĕ пионер отрйадне йертсе пыма хушнă. Вăл ку ĕçе те пысăк ответлăхпа туса пынă. Пионерсем Тамара Алексейевнăна йуратаççĕ. Моисейева йулташ вĕсемпе йаланах калаçусем ирттернĕ, савăнăçлăн канма пулăшнă.

1937 çулхи август уйăхĕнче Моисейева йулташа комсомолăн районри конференцийĕ райкомол членне суйланă. Комсомол организацийĕ пысăк шанăç пани Тамарăна пушшех хавхалантарнă. Çакăн хыççăн производствăра тата общественлă ĕçсенче халичченхинчен те ытларах тăрăшса ĕçлеме пуçланă.

Унăн мухтавă тивĕç ĕçĕсене шута илсе, Улатăрти суйлав округĕнчи суйлавçăсем Моисейева йулташа Совет Сойузĕн Аслă Советне суйланма кандидата тăратнă.

Нахаçан та манас çук вăл çав куна. Чукунçул çинче ĕçлекен рабочисен клубне суйлав умĕнхи пухува пуçтарăнна ĕççыннисем хăйсен резољуцийĕнче „Государствăн Аслă органне—ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Национаљнăçсен Советне суйланма кандидата, хăй партине тата совет влаçне чĕререн парăннине ĕçре кăтартнă, Улатăрти паровозсене йусакан заводри чи лайăх стахановкăна, токарнăй-механически цехри бригадира—Тамара Алексейевна Моисейева йулташа палăртатпăр“ тени ăна ăнсăртран пулнă пек туйăннă. Анчах пĕре те апла мар. Колхозсенчи суйлавçăсем те унăн кандидатурипе килĕшнĕ, Совет Сойузĕн Аслă Советне депутат пулма кандидата пĕтĕм тĕнчипе паллă љотчике—Валерий Павлович Чкалова тăратнипе пĕрлех унăн кандидатурине те çирĕплетнĕ.

Моисейева йулташ çакă чыса тивĕçлĕ. Вăл хăйне пăхса çитĕнтернĕ, вĕрентнĕ, ĕç прави, кану прави, савăнăçлă пурнăç прави, суйлама та, суйланма та права панă çĕршыва чĕререн парăннине епĕр унăн ĕçĕсем тăрăх пĕлсе тăратпăр. Вăл—пирĕн çĕршывăн мухтавлă хĕрĕ.

Т. А. Моисейева биографийĕ

Улатăрти паровозсем йусакан заводри, Улатăр МТС-ĕнчи рабочисем, инженерсемпе техниксем тата Улатăр районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан тата „Путь Ильича“ колхозсенчи колхозниксем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Национаљнăçсен Совет депутатне Чăваш АСС Республикĕнчи Улатăр суйлав округĕ тăрăх суйлама кандидата Моисейева, Тамара Алексейевнăна—Улатăрти паровозсем йусакан заводри токарно-механически цехра ĕçлекен мастера палăртнă.

Моисейева Т. А. йулташ 1931 çултанпа ПСÇЛКС членĕнче тăрать. Вăл 1915 çулхи апрелĕн 2-че Улатăр хулинче, чукунçул мастерскойĕсенче ĕçлекен рабочи çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕ хăйĕн пĕтĕм ĕмĕрĕ тăршшĕнче—34 çул хушши тăтăшах мастерскойсенче тата паровозсем йусакан заводра ĕçленĕ, халĕ пенси илсе пурăнать. Национаљнăçĕ—вырăс.

Моисейева Т. А. 1929 çулта Улатăрти Калинин йачĕпе тăракан çичĕ çул вĕренмели шкула пĕтерет. 1929 çултан пуçласа 1933 çула çитиччен транспорт Учебнăй камбинатĕнче вĕренет. 18 çула çитсен 1933 çулта заводра ĕçлеме пуçлать. Хаљхи вăхăтра Моисейева йулташ 3 çула йахăн ĕнтĕ Улатăрти паровозсем йусакан заводри токарно-механически цехра мастер (бригадир) пулса ĕçлет. Вăл йертсе пынипе квалификацилĕ 80 рабочи ĕçлеççĕ.

Унăн бригади хăйĕн планне 120—125 проц. тултарать, уйрăм стахановецсем 200—300 проц. та тултараççĕ. Октябĕр революцин 20 çулĕ тĕлне вĕсем хăйсен уйăхри планне 150 проц. тултарма обйазателствă илнĕ. Хăй çине илнĕ обйазателствăна Моисейева пурнăçа кĕртнĕ.

Моисейева Т. А. общественлă пурнăçра активлăн хутшăнса ĕçлет. 1934 çултанпа вăл хула Совет членĕн кандидатĕнче, 1937 çултанпа ПСÇЛКС Райком пленумĕн членĕнче, завком членĕнче, ПСÇЛКС комитет членĕнче тăрать, пионеротрйада йертсе пырать. Агитатор пулса ĕçлет, рабочисем хушшинче тăтăшах калаçусем туса ирттерет.

Моисейева А. Т. йулташ—Улатăрти паровозсем йусакан заводри чи лайăх стахановкă. Пирĕн парти ĕçне тата социалисăмлă тăван çĕршыва чĕререн парăннине вăл ĕçре кăтартса парать. Октябĕрти револљуци 20 çул тултарнă тĕле завод администрацийĕ ăна Сталин призывĕнчи ударникĕн значокĕпе наградăлама палăртса хунă.

Моисейева йулташ, пирĕн Совет Сойузĕнчи пур çамрăксем пекех, хамăрăн тăван çĕршывăн чи лайăх хĕрĕ, хăйĕн çамрăк вăйĕпе пултарулăхне социалисăмлă тăван çĕршывшăн пама хатĕр. Моисейева йулташа ватă рабочисем, работницăсем тата колхозниксем çакăншăн йуратаççĕ те ĕнтĕ.

Рабочисене канма—11.141 тенкĕ

Çĕмĕрлери механизацилĕ вăрман пунктĕнче ĕçлекенсенчен кăçал 18 çын канмали çуртсемпе санаторисенче пулнă. Вăл шутран хăшĕсем икшер çĕрте те пулчĕç. Акă вăрман турттаракан чи лайăх стахановец Туганов й. Ленинградри канмали çуртра тата Горькипе Астрахаљ хушшинче Атăл тăрăх пароходпа пĕр уйăх канса çӳрерĕ, т. ыт. те. Халĕ вĕсем производствăра аван ĕçлеççĕ.

Кунсăр пуçне 19 ачи пионерсем лагерĕнче каннă.

Чăваш республикĕнчи суйлав округĕсем тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсен списки

Сойуз Советне

1. Андрейева Зойа Ананийевна—Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ. 1899 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ. Сойуз Советне депутата суйлама Шупашкарти № 364 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

2. Спасов Лука Семенович—Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ. 1899 çулта çуралнă, парти членĕ. Сойуз Советне депутата суйлама Улатăрти № 366 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

3. Краснов Андрей Михайлович—орденоносец, Йетĕрне районĕнчи Тури Ачак йалĕнчи „Крестьянская газета“ колхоз председателĕ. 1906 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ. Сойуз Советне депутата суйлама Çĕмĕрлери № 367 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

4. Цыганова Йевдокийа Петровна—Куславкка комбинатĕнчи стахановкă. 1909 çулта çуралнă, ПСК(б)П кандидачĕ. Сойуз Советне депутата суйлама Канашри № 365 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

Национаљнăçсен Советне

1. Иванов Герасим Иванович—ПСК(б)П Обком секретарĕ. 1905 çулта çуралнă, Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Вăрмарти № 499 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

2. Коротков Сергей Ксенофонтович—орденоносец, Вăрнар районĕнчи Којцовка йалĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ. Халĕ Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителне суйланă. 1908 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Йĕпреçри № 501 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

3. Стецкий Алексей Иванович—ПСК(б)Парти Тĕп Комитечĕн агитаципе пропагандă пайĕн пуçлăхĕ, „Бољшевик“ журналăн редакторĕ, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн членĕ, ПСК(б)П членĕнче 1915 çултанпа тăрать. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар хулинчи № 496 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

4. Моисейева Тамара Алексейевна—Улатăрти паровозсем йусакан заводри механически цехăн бригадирĕ. 1915 çулта çуралнă, ПСÇЛКС членĕ. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Улатăрти № 503 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

5. Краснов Петр Дмитрийевич—ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ, 1903 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Çĕрпӳри № 498 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

6. Новиков Иван Васильевич—ПСК(б)П Çĕмĕрле райком секретарĕ. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Çĕмĕрлери № 505 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

7. Горкин Александр Федорович—ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн секретарĕ. 1887 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Канашри № 500 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

8. Пумпур Петр Иванович—Мускаври Çар Округĕн Çар сывлăш вăйĕсен начаљникĕ, 1900 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Вăрнарти № 504 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

9. Харитонова Ољга Тихоновна—Патăрйел районĕнчи Хирти Сĕнтĕрти вăтам шкулти учителницă. 1900 çулта çуралнă, 1927 çултанпа парти ретĕнче тăрать. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Патăрйелти № 502 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

10. Розанов Алексей Михайлович—Чăваш АССР Шалти ĕçсен халăх комиссарĕ. 1900 çулта çуралнă, 1919 çултанпа ПСК(б)П членĕ. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Йетĕрнери № 506 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

11. Сахйанова Марийа Михайловна—ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Партилĕ Контроль Комиççин Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйĕ. 1896 çулта çуралнă. Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар йал № 497 Суйлав Округĕнче регистрацилен̆ĕ.

ОКТĂБĔР РЕВОЛЮЦИЙĔ ÇИРĔМ ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ТĔЛЕ

В. М. МОЛОТОВ

1937 çулхи нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче Пысăк театрта чаплă заседанире тунă доклад

I. Пирĕн çĕнтерӳвĕн пĕлтерĕшĕ

Пултанçем!

Пайăн Совет Союзĕн ĕçсынисем аслă хавасăх тулăмĕпе Октябĕр революцийĕ çирĕм çул тултарнине уявлаççĕ. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Пирĕнтен, хăйсен ăстăнлă пурнăçне 1917 çулчен пуçланисем, Октябĕр революцийĕ пирĕн пурнăçра тĕпрен тунă улшăнусене хăйсен опычĕ тăрăх пĕлеççĕ. Пулашки çирĕм çул хушшинче ситĕнпĕ ăру киве буржуалă-помещиклă Российйăн вăйне-пуçнех аркатса тăкас ĕçе тата çĕнĕ, социалисăмлă строй тăвас ĕçе хутшăнса ĕçлерĕ. Çак кунсенче пирĕн мĕн пур хуласемпе ялсенче, çĕршывăн кашни кĕтессинче, ĕçсынисен шухăшĕсем Социалисăмлă революцин аслă çирĕмçулăхĕн событийĕсем çинче, унăн чаплă çĕнтерӳвĕсем çинче тата пирĕн умра ӳсĕлсе тăракан çутă малашлăх çинче тăраççĕ.

Совет Союзĕнчи рабочисемпе хресченсем кăна мар, çавăн пекех капиталисăмлă çĕршывĕсенчи тата колонисенчи ĕçсынисем те Октябĕр революци çĕнтерне пирки çак кунсенче хĕпĕртесе савăнаççĕ. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).** Вĕсем Совет Союзĕн вăйĕсем пĕрмайăх ӳссе пынинчĕ, çав вăйсем вĕсен кусĕ умĕнче чечеклентсе пынинче, государствă влаçне ĕçсынисем туртса илсе, мĕн тума пултарнине кураççĕ. Пирĕн тăшмансем, Октябĕр революцийĕн тăшманĕсем тем хăтлансан та, Октябĕр революцийĕн пĕлтерĕшне пĕчĕклетме кирек мĕн шухăшласа кăларсан та, пирĕн революци çинчĕн тĕрĕслĕх,—Совет Союзĕ çинчен чăн-чăн, нимĕнпе капăрлатман тĕрĕслĕх,—пур çĕре те пырса кĕрет, ССР Союзĕн чиккисенчен инçете пырса çитет тата мĕн пур ăстăнлă çынсене, капиталисăма хирĕç кĕрешме пултаракансене, пурне те хăй йенне çавăрат. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Октябĕр революцийĕн аслă вăйĕпе унăн пĕтĕм тĕнчелĕ пĕлтерĕшĕ çакăнта пулат: вăл ĕçсынисен ĕмĕртенхи ĕмĕтне, эксплоататăрсен пусмăрĕнчен тата капиталиссемпе помещиксем патĕнчи чуралă ĕçрен хăтăлас ĕмĕте, пурнăçа кĕртрĕ. Вăл пĕтĕм етемлĕхĕн чи лайăх çыннисем нумай-нумай ĕмĕрсем тăршшĕнче ĕмĕтленнине пурнăçа кĕртрĕ.

„Çĕнĕ ерă“ тени патне ситиччен пĕр пинçулăх кăна мар иртнĕ. „Çĕнĕ ерă“ пуçланнăранпа тата 1900 çул ытларах иртрĕ, вара тин ĕçсынисене капитала хирĕç, буржуазипе помещиксен влаçне хирĕç, çапăçува илсе кайнă вăй тупăнчĕ, революцилĕ организаци тупăнчĕ. 1917 çулта рабочисем хресченсемпе пĕрле, влаçа хăйсен аллине туртса илсе, пирĕн çĕршывра пролетариат диктатури туса, хăйсене пусмăрлакансене çапса çĕмĕрчĕç.

Социалисăмлă революци пулассине пирвайхи пĕтĕм тĕнчери империалисăмлă вăрçă хăвăртлатрĕ. Вăл Российйăри рабочисемпе халăх массисене кăна мар тарăхтарса антратса ситерпĕ. Анчах тĕнчери капиталисăмăн чи вăйсăр сыпăкĕ вăл вăхăтра кивĕ, патша, буржуалă-помещиклă Российйă пулнă. Тепĕр йенчен, пĕтĕм тĕнчере чи революцилĕ клас пирĕн çĕршыври рабочи клас пулнă, вăл аслă Ленин йертсе пынипе большевикла парти тунă. **(Алă çупаççĕ).**

Нумай вăхăта тăсăлнă империалисăмлă вăрçă малтан патша влаçне пĕтерсе лартнă. Вăл Российйă вăйĕсене, государствăна пĕтĕмпех крах, арканса кайасси хăратас таранах хавшатса пĕтерпĕ. Пĕтĕм халăх мир тума, сывлăш çавăрма, ыйтнă. Влаçра тăнă ĕнтĕ кадетсем, есерсемпе меньшевиксем вăрçа „кирек мĕн пулсан та“ тăсасси çинчен çухăрнă, вĕсене Российйă буржуазийĕпе Англи — Франци империалисĕсем пулăшса тăнă. Çав влаç капиталисăма тата буржуалă классем пуçпулса тăрассипе сыхласа хăварасшăн пулнă. Вăл нумай миллионлă хресченсен масси помещиксен çĕрĕсене хăйсен аллине çавăрса илесшĕн царисăма сирĕтсе антарнине шута илмен: Çĕре хресченсен аллине парас вырăнне кадетла-есерла-меньшевикла влаç вĕсене пустуй сăмахсемпе тăрантарса тăнă. Рабочисен тата хулари ĕçсынисен ытти сийĕсен пурнăçĕ кунран кун йапăхлаçса пынă, Керенски правительстви ĕнтĕ вăл положенийе улăштарма пачах пултарайманнине ытларан ытла кăтартнă. Буржуалă влаçа сирĕтсе антарасси çивĕчĕн тухса тăнă. Вара большевикла парти рабочисене тата хресчен чухăнĕсене революци çулĕ çине тăма чĕннĕ, революци, Ленин каланă тăрăх,

„эксплоататăрсене айа туса çĕнтерӳ парĕ, хресченсене çĕр парĕ, халăхсене мир парĕ, пĕтĕм тĕнчери социалисăмлă пролетариатăн çĕнтерӳлĕ революцийĕ патне тĕрĕс çул уçса парĕ“.

Çапла палăртса панă Ленин революци тĕллевне Октябĕрти восстани умĕн. Çав тĕллевсем пирĕн революцийĕ ытти революцисенчен уйăрса тăнă.

Пĕтĕм палти тата тулти обстановкăпа пулă Октябĕр революцийĕ ытти революцисенчен ăрасна, уйрăм характерлă пулса тăчĕ. 1918 çулти йанварте пĕтĕм Российйăри Советсен Сйесĕнче Октябĕр революцийĕн пирвайхи итогĕсене туса, Ленин çапла каланă:

„Пур аслă революцисем малалах капиталисăмлă кивĕ стройа тĕппипех пĕтерсе хума тăрăшнă, политикăлă правасене туртса илме кăна мар, кирек мĕнле эксплоатацийе тата кирек мĕнле пусмăра. ĕмĕрлĕхех пĕтермешкĕн, государствă тытăмне хăйне пуçпулса тăракан классен аллинчен, ĕçсынисене гĕрлĕ эксплоатацилекенсен тата пусмăрлакансен аллинчен, туртса илме те тăрăшнă. Аслă революцисем эксплоататăрла государствăн çав кивĕ аппаратне çĕмĕрсе тăкма шăнах тăрăшнă та, анчах çавна вĕçне ситиччен туса çктерме ку таранччен май килмен. Акă ĕнтĕ Российйă хăйĕн хуçайствăлă тата политикăлă положенийĕн уйрăмлăхĕсене пула, халĕ государствă тытăмĕ ĕçсынисен хăйсен аллине куçассине чи пирвай пурнăçа кĕртрĕ. Халĕ епĕр, историлĕ çӳп-çапран тасатнă çул çинче, социалисăмлă обществăн хăватлă, çутă çуртне тăвăпăр, çĕнĕ йышши, историре пулман, государствă влаçĕ, революци ирĕкĕпе, тĕнчене кирек мĕнле эксплоатациран, ирĕксĕрлĕхрен тата чуралăхран тасатма тивĕçлĕскерне, тăватпăр“. **(Тăвăллăн алă çупса йараççĕ).**

Çав сăмахсенче Ленин пирĕн революци ытти революцисенчен татăклăн уйăрăлса тăнине кăтартса панă.

Мĕн пур ытти революцисем политикăлă правасене пĕртак аслатнинчен тата ĕçсынисен пурнăçне вăхăтлăха çăмăллатнинчен малала кайман, çавă та чи лайăх пулсан çеç пулнă: Париж Коммунине ку революцисен шутне кĕртместтпĕр, унăн, влаç ĕçсынисен аллинче тăнă чухне, кĕске вăхăтлăха ăнăçусем пулнă. Çав революцисем пурте влаçа ĕçсынисене эксплоатацилекенсен тата пусмăрлакансен аллинчех хăварнă. Влаçа пĕр эксплоататăрсем вырăнне теприсем илнĕ, анчах привилегилĕ классем хăйсем пуçпулса тăрассине çухатман. Пур çав революцисем вăхăтĕнче буржуазийĕ хăйĕн, **буржуалă диктатурине,** хăйĕн влаçне сыхласа усрама май килнĕ.

Çавсем пурте буржуалă революцисене хутшăннă ĕçсынисене, паллă таран, шанчăка çухатасси патне илсе пымасăр тăма пултарайман. Çав революцисене ĕçсынисем влаç тытса тăракан классен пусмăрĕнчен, тинех те, хăтăлас тĕллевсемпе, туртăнусемпе тата шанчăксемпе хутшăннă. Анчах буржуалă пур революцисем те, влаçа хăйсен аллинчех хăварса пынă эксплоататăрлă классем хирĕç тăнă пирки çав туртăнусемпе шанчăксене пĕтерсе пынă. Пур çав революцисем çакăнпа пĕтнĕ: халăх хăй кăнăçманнине, хăйĕн тĕллевне пурнăçа кӳртменнине туйса тăнă. Çавă вăл массăсем хушшинче революцийе шанассине пĕтерсе пынă, ĕçсынисем хăйсен вăйĕсене ĕненменнине çуратса кăларнă, çавă пусмăрлакан классемшĕн усăлă пулнă.

1917 çулхи октябĕрте ĕлĕкхи, буржуалă сăнарлă революцисенчен социалисăмлă сăнарлă революци йенеле пĕтĕм тĕнчеле-историлĕ çаврăну пулса тăнă. Историре пуçласа эксплоататăрсен влаçне сирпĕтсе антарнă, **рабочи класăн диктатури** çĕнтерĕ, государствă тытăмĕ ĕçсынисен аллине куçнă. Ĕçсынисем чурасенчен, пусмăрта пурăнакансенчен, експлоатацилененкенсенчен ирĕклĕ çынсем тата йăлтах хăйсен кунçулĕн хуçисем пулса тăнă. Рабочисемпе ĕçсынни хресченĕсем, влаçа алла илсе, пурнăçа хăйсем мĕнле тума шутланă, çавăн пек тума май илнĕ. Тĕп ыйтува, влаç ыйтуне, татса парса, рабочи клас хресченсемпе пĕрле çĕнĕ пурнăç пуçласа йанă, „социалисăмлă обществăн çутă çуртне“ тума тытăннă.

Октябĕр революцийĕ, çĕнтернипе ĕçсыннисен тата етемлĕхĕн чи лайăх представителĕсен ĕмĕчĕ пурнăçа кĕчĕ. Çав вăхăтранпа икĕ тĕнче, хирĕçле принципсем çинче никĕсленсе тăраканскерсем, ăмăртни, çĕнĕ обществă киввине ăмăртни, социалисăм капиталисăмпа ăмăртни пуçланса кайрĕ: Çав ăмăрту çкне пур çĕршывсенче те тилмĕрсе пăхса тăраççĕ.

Кивĕ обществăн никĕсĕ уйрăм харпăрлăх пулнă, ун чухне призводствăн мĕн пур хатĕрĕсем капиталиссен, пуйансен, аллинче пулнă. Капиталиссен влаçĕ çавăн çинче, капитал хăватлăхĕ çинче, тытăнса тăнă. Совет влаçĕ, хуçайствăн социалисăмлă системине туса тата производствăн ордийĕсемпе хатĕрĕсене социалисăмлă харпăрлăх туса, хуçайствăн капиталисăмлă системине пĕтерчĕ тата производствăн ордийĕсемпе хатĕрĕсем уйрăм харпăрлăх пулнине пăрахăça кăларчĕ. Производствăн ордийĕсемпе хатĕрĕсем йе социалисăмлă государствă аллинче йе пирĕн социалисăмлă колхозсемпе кооперации аллинче тăма пуçларĕç. Государствă аллинче те, колхозсемпе кооперации аллинче те тăрса вĕсем уйрăм çынсен урăххисен шучĕпе пуйас интересĕсене мар, халăх интересĕсене, ĕçсынисен интересĕсене усă кӳрсе тăраççĕ. Çавă вăл пĕчĕк улшăну мар, обществăна тĕпрен çĕнĕле йĕркелени, унăн економикăлă никĕсне тĕпрен урăхлатса туни пулат.

Çĕр уйрăм çынсен харпăрлăхĕ пулнине пăрахăça кăларни, фабрикăсемпе заводсем уйрăм çынсен харпăрлăхĕ пулнине пăрахăça кăларни, чукунçулсем тата хулари пурăнмали çуртсем уйрăм çынсен харпăрлăхĕ пулнине пăрахăça кăларни тата çавăн йышши ытти ĕçсем пирĕн çĕршывра капиталисăмлă классене тата мĕн пур харампырла, ĕçлемесĕр пурăнакан елементсене пĕтĕмпех пĕтерсе хурасем патне илсе пычĕç. Пирĕн çĕршывра капиталиссем те, помещиксем те, кулаксем те, купцасем те, халăх йĕнси çинче ларакан ытти çынсем те йулмарĕç. Пирĕн саккунсем вĕсене пурăнма тата кирек йепле харампырсене çĕнĕрен шăтса тухма май памаççĕ. Пирĕн обществăлă строй рабочисемпе хресченсем туслă çыхăнса тăни çинче никĕсленсе тăрат, вĕсем ĕçсынисен совечĕсем урлă çĕршыва тытса тăраççĕ тата хăйсен çĕнĕ пурнăçне тăваççĕ.

Çавăнта мар-и те ĕнтĕ пулнă Октябĕр революцийĕн тĕп тĕллевĕсем? Паллах, çавăнта пулнă. Еппин рабочи клас ĕçхресченĕсемпе пĕрле, влаçа хăйĕн аллине илсе, унпа Октябĕр революцийĕн тĕп тĕллевĕсене пурнăçа кĕртмешкĕн чăнчăнах усă курнă. Çав тĕллевсене йепле пысăк ăнăçусемпе пурнăçа кĕртсе пыни çинчен, епĕр мĕн ĕнтĕ çĕнтерсе илни çинчен, халĕ вара çавна пирĕн тĕп саккунра çырса хуни çинчен,—çавсем пурин çинчен Совет Союзĕ йышăннă Сталинла Конституци ахаль сăмахсемпе, анчах вут пек çутă сăмахсемпе каласа парат. **(Алă çупаççĕ).** Сталинла Конституци Октябĕр революцийĕн çĕнтерӳлĕ ăнăçувĕ çинчен калат, вăл пирĕн революци хăйĕн тĕп тĕллевне чăн-чăнах пурнăçа кĕртни çинчен тата хăйне вальли çĕнĕ аслă çĕнтерӳсем патне каймали çула тасатни çинчен калат.

Çакăнтан килет те ĕнтĕ Октябĕр революцийĕн тата вăл тунă стройăн пĕтĕм тĕнчелĕ пĕлтерĕшĕ ӳссе пыни.

Ĕçсынисен массисем—государствăна тытса тăрас ĕçе хутшăнни çĕнĕ стройăн никĕсĕ пулса тăрат. Çавăнсăр совет влаçĕн нимĕнле ăнăçувĕсем çинчен сăмах та пулма пултарайман пулĕччĕ. Пирĕн çĕршывра пролетариат диктатури çĕнтернине пула кăна тата пĕтĕм ĕçсыннисене государствăна тытса тăрас ĕçе хутшăнма вĕçĕмсĕр май паракан чи çӳлти сăнарлă демократисăма, социалисăмлă демократисăма, пула кăна, çавна пула кăна Совет государстви пурăнат тата вăл пĕрмайах тĕреклене пырат. **(Алă çупаççĕ).**

Çав демократисăм буржуалă государствăсен демократисăмĕ йеверлĕ мар. Кам çавна ăнланман,—вăл социалиç мар, пролетарилĕ революционер мар, вăл ĕçсынисене капитал пусмăрĕнчен хăтарасшăн ăстăнлă кĕрешекен çын пулма пултараймаст.

Демократилĕ сăнарлă буржуалă государствăсенче граждăнсен прависем формальлă пĕр танни çинчен хытăн каласа пĕлтереççĕ, анчах вĕсенчен пĕрисем експлоатациленекен тата пусмăрта пурăнакан мĕнле пулнă, çаплипех йулаççĕ, теприсем—хăйсен халăхне експлоатацилекенех тата пусмăрлаканах пулса йулаççĕ! Чи демократилĕ буржуалă çĕршывра та ĕçсыннисемшĕн демократийе ансăр рамкăна кӳртсе хунă та ăна та, вăл експлоататăрсен класĕсем пуç пулса тăрассине чăрмантарман таран çеç чăтса тăраççĕ. Буржуалă çĕршывсенче пуçра тăракан господасем демократисăмпа хăйсен интересĕсемшĕн усă кураççĕ, а ĕçсынисен политикăлă прависене мĕнле те пулин анлăлатас тĕпине хирĕç темĕн пек хытă тăраççĕ.

Пирĕн строй урăххи çинче никĕсленсе тăрат. Государствăна тытса тăрас ĕçе ĕçсынисем мĕн чул хастарлăрах та мĕн чул пур йенлĕрех хутшăнаççĕ, çавăн чул, пирĕн строй тĕреклĕрех пулса пырат.

Епĕр ĕçсынисен демократисăмне пур йенпе те аталантарас никĕс çинче тăнине, епĕр ĕçсынисем государствă ĕçĕсене тата пирĕн пĕтĕм обществăлă пурнăçа тĕрессине пур майсемпе те вăйлăлатас çулпа пынине Сталинла Конституци çĕнĕрен кăтартса пачĕ. Пирĕн стройăн демократисăмĕ Совет Союзĕн мĕн пур граждăнĕсен суйлав прависене кирек мĕнле пĕрсе хунине пĕтернипе кăна мар, хĕрарăмсене арçынсемпе пĕтĕмпех пĕртанлă тунипе кăна мар, ССР Союзĕнчи пур халăхсем пĕтĕмпех пĕртан пулнипе тата кайарах йулнă нацисене государствă ытларах пулăшнипе кăна мар паллă пулса тăрат. Пирĕн стройăн демократисăмĕ, кусемсĕр пусне, çакăн пек правасем çинчен—ĕçлев прави, канăç прави, пур ĕçсынисен те чи аслă шкулсене çитийех укса тӳлемесĕр вĕренме права пурри çинчен каланипе паллă пулса тăрат. **(Алă çупаççĕ).** Буржуалă государствăсен, вĕсен шутĕнче чи демократилĕ государствăсен те, конституцийĕсем нимĕнле ун йеверлĕ йапаласем çинчен пĕлмеççĕ. Ĕçсынисен ун пек прависем çинчен Сталинла Конституци, çĕнтерӳлĕ социалисăмăн Конституцийĕ, социалисăмла демократисăм Конституцийĕ кăна калат. **(Алă çупаççĕ).**

Конституци çкне кăна мар пăхăр. Простой фактсене илĕр. Çакăн пек факта: ĕçлевĕн простой çыннисем çине, калăпăр, фабрикăсенчи, заводсенчи, колхозсенчи епĕр стахановецсем тесе йат панă çынсем çине обществă мĕнле пăхнине илĕр. Пирĕн çĕршывра простой рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, производствăра лайăх ĕçленин тĕслĕхĕсене панăскерсем, пурте пĕлекен çынсем пулса тăраççĕ, чапа тухаççĕ. Простой рабочисемпе хресченсем хушшинчен тухнă стахановецсем, ĕнер кăна вĕсем çинчен никам пĕлменскерсем, фабрикăра йе обшчествăлă урăх хуçайствăра лайăх ĕçленин тĕслĕхне панипе кăна вĕсем чи паллă йатсем пулса тăни тата халăхăн йуратакан çыннисем пулса тăни мĕнле çĕршывра пулма пултарат? **(Алă çупаççĕ).** Рабочи ĕçлевĕпе хăйпе, тĕрĕсĕпе каласан, никам та интересленмен, рабочийе ĕçлеттерекен хуçа пĕр йапалапа кăна,—рабочи ĕçлевĕнчен килекен усăмпа кăна интересленекен буржуалă çĕршывсенче мĕнте пулса çавăн пекки пулма пултарат-и.

Пĕр буржуалă çĕршывра та ĕçлевĕн простой çыннисем хăйсен лайăх ĕçĕшĕн, пĕтĕм халăх пĕлекен йата тухма пултарасси çинчен шухăшлама та май çук. Пирĕн ĕнтĕ вăл кулленхи йапала пулса тăчĕ. Епĕр пурте пĕлетпĕр, çакă вăл наукăпа кекусствă çыннисене кĕçĕне хунипе, хуçайствăпа культурă тĕлĕшпе ĕçлекен çынсене кĕçĕне хунипе пулса пымаст. Пирĕн строительствăн мĕн пур отрăçлисен тата пур йышши творчествăлă ĕçхĕлĕн чи паллă представителĕсене, пирĕн мĕн пур ĕçлев интеллигенцине обшчествă йуратса тăрат тата вĕсене государствă хастарăн пулăшса тăрат. Халăхшăн ĕçлесе, ĕçĕн ку йе урăх отрăçлисене тӳрĕ йертсе пырса, пирĕн руководителĕсен, Сталин йулташ каласа панă пек, „халăх шанчăкĕпе тата йуратувĕпе усă курма пур сăлтавсем те пур“. **(Алă çупаççĕ).** Ĕçсыннисем влаçра тăракан тата ĕçлев çыннине обществăра хисеплĕ вырăн паракан стройа пур çĕршывсенчи ĕçсынисем кăмăлламасăр тăма пултараймаççĕ. Советлă çĕнĕ стройăн пĕтĕм тĕнчелĕ пĕлтерĕшĕ пирĕн куç умĕнчех ӳссе пырат.

Малала. Совет государствин пĕтĕм тĕнчери çыхăнусенчи ролĕ çавăн пекех паллă. Халăхсен аслă туслăхĕ çинче никĕсленсе тăракан ССР Союзĕ пĕтĕм тĕнчери чи пысăк событисенче ытти государствăсем хушшинче ăрасна вырăн йышăнса тăрат.

Хăйĕн демократилĕ прависемшĕн тата ирĕклĕхшĕн кĕрешекен Испани халăхĕ тĕлĕшпе Совет Союзĕн позицийĕ çинчен калани те çителĕклĕ. Совет Союзĕ республикăлă Испани çине хăй кăмăллăн пăхнине пытарман кăна мар, вăл Испани демократилĕ республикĕн ĕçĕ хăйĕн сывăх ĕçĕ, пĕтĕм прогрессивлă етемлĕхĕн ĕçĕ тесе шутлани çинчен уççăн каласа пачĕ. **(Алă çупаççĕ. Сасă: „Виват камрад Сталин!“ Тăвăллăн алă çупаççĕ. Сасăсем: „Сывă пултăр Республикăлă Испани!“ „Урра!“).** Испани демократине çавăн пек тӳрĕ пулăшас позицирен мĕн тери инçетре тăраççĕ-ха, хăйсене, çапах та, демократилĕ çĕршыв вырăнне шутлама йуратакан государствăсен правителствисем.

Йе Китайри событисене илĕр. Китай халăхне кăмăлланипе тата Йапони агрессии çине мĕнле пăхнипе Совет Союзĕ хăйне Китай хушшинче пĕр-пĕрне тăпăнмала мар пакт тунипе кăтартса пачĕ. **(Алă çупаççĕ).** Анчах ытти государствăсем Китай халăхне хирĕç пыракан темĕн пек усал агрессийе хирĕç тăрас шутпа пĕр утăм та пулса тунине епĕр пĕлместпĕр-ха. Кунта та Совет Союзĕ ытти государствăсен уиккăнĕ хушшинче хăйĕн ăрасна позицийĕпе, йутçĕршыв агрессине тӳсекен халăх çине тӳрĕ пăхнипе тата ăна чунтан кăмăлланипе паларса тăрат. **(Алă çупаççĕ).**

Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчелĕ политики пур çак çулсем хушшинче улшăнмасăр тăнă. Унтан тĕрĕсрех тата вĕçне çитийех миршĕн тăракан урăх çĕршыв пуррине никам кăтартса параймас çук. Мирлĕ политикăпа вĕçне çитийех тытса пынипе тата пĕтĕм тĕнчери мирлĕ сыхăнусене тĕреклетме тăрăшнипе пирĕн çĕршыв хăйĕн вăйĕ çине шанса тăни паларат, тесен тĕрĕс пулĕ. **(Алă çупаççĕ).** Пирĕн халăх хуçайстви пĕрмайах ӳссе пырат, культурлă строителствă пĕрмайах харпăрса пырат, çавăнпа та пире йутçĕршывсем тĕлĕшпе нимĕнле авантӳрăсем тума та кирлĕ мар. Антив çав ĕçпе ыттисем хăтланччĕр, вĕсен урĕ айĕнче çав тери çунат пулсан **(кулаççĕ, алă çупаççĕ).** Анчах пытармастăп, епĕр Хĕрлĕ çарпăн тата унăн тĕрекĕшĕн тăрăшатпăр **(тăвăллăн алă çупаççĕ)** тата авантӳрăсем, туринчен ытла фашиссем йенчен, пулма пултарни çинчен манмастпăр.

Анчах ССР Союзĕн пĕтĕм тĕнчелĕ пĕлтерĕшĕ халĕ мĕнре паларнинчен чи пахи вăл—Совет Союзĕ ытти çĕршывсенчи ĕçсынисен ăсĕсемпе кăмăлĕсем çине ăрасна политикăлă влийани пани пулат.

Ĕлĕкхи революцисем революцилĕ кĕрешӳре ĕçсынисен шанчăкĕ хуçаласси патне илсе пынă пулсан, ĕçсынисем хушшинче вĕсем хăйсен вăйĕсене шанмассине çуратса кăларнă пулсан, пирĕн революцин тата унăн чаплă çирĕмçулăхĕн влийанийĕ урăхла, йăлтах тепĕр майлă. Халĕ ĕнтĕ ĕçсынисем капиталиссемпе помещиксемсĕрех пурăнма пултарни çинчен, пирĕн вăхăтра ĕçсынисен влаçĕ чи пысăк вăй пулни çинчен каласа ĕнентерме кирлĕ мар. **(Алă çупаççĕ).** Çавăн пирки иккеленекенсем халĕ çĕнĕ стройа тата вăл советсен влаçĕ чухне çĕнтерсе илнисене хăйсен аллисемпе хыпаласа пăхма пултараççĕ. Ĕçсынисен влаçĕн пурăнăçлă формине тупнă, унăн социалисăмлă ăшчиккине те уçса панă. Буржуалă революцисем ĕçсынисем хăйсен вăйĕ çине шанассине татса пăрахас тĕлĕшпе нумай тунă. Анчах, ыйтăпăр епĕр, Октябĕр революцийĕ тата совет стройĕ çавăн пек шанманнине пĕтерсе хума тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсынисен хавасне çĕклеме сахал тунă-им?

Тепĕр чухне ĕçсынисен вăйĕ сахал пек, çав вăйсем капиталисăм тыткăлĕнчен çăлăнса тухма çитмен пек курăнма пултарнă. Çавăн йышши тĕшмĕшсене ĕненсе тăмала тавасшĕн, хăйсен вăйне çавăн пек ĕненмеле мар тăвасшĕн буржуази пурне те тунă, çавăншăн вăл хăйне вальли тарса суйа-социалисла билетсене кĕсйере тытакан тĕрлĕ йышши „социалиссене“ илнĕ. Чăннипе каласан, ĕç, паллах, ĕçсынисен вăйĕ çитменнинче мар. Ĕç массăсен организацилĕхĕ çитменнинче кăна, (пуринчен ытла вара—класлă ăстăнлăх çитменнинче.

Совет Союзĕ, рабочисемпе хресченсен массисене хăйсен вăйĕсене ĕненме вĕрентсе, хăйĕн социалисăмлă аслă çĕнтерӳвĕсемпе мĕн пур çавăн пек тĕшмĕшсене çапса çĕмĕрет. Пророкла пулма хăтланар мар, пĕр факта çеç асă илтерер. Октябĕр çĕнтерессине ĕненсе тăпă çынсем, Октябĕрти восстани умĕн пĕрик-виçуйăх пулин те маларах илсен, пирĕн çĕршывра нумай пулнă-ши? Пит нумайах пулман. Унтанпа положени вăйлăн улшăнчĕ. ССР Союзĕнче социалисăм çĕнтерни пĕтĕм тĕнчери ĕçсынисен хушшинче хăйсен вăйне ĕненменнин тымарĕсене татса пыни çинчен калама та кирлĕ мар. ССР Союзĕнче социалисăм çĕнтерни капиталисăм пусмăрĕнчен хăтăлма ĕмĕтленекен ĕçсынисен положенине нумай йенчен çăмăлатат. Иккеленмелли çук, çав шухăш нумай çĕршывсенчи ĕçсынисем хушшинче хăвăрт писсе пырат. Ĕçсынисем хăйсен вăйĕсене ĕненмесни халĕ хăвăртран-хăвăрт пĕтсе пырĕ. Аса илер ĕнтĕ Ленин пире Октябĕр умĕнхи кунсенчех „чи кирли—пусмăрта пурăнакансене тата ĕçсынисене хăйсен вăйне шанмала тăвасси“ пулат тесе вĕрентнине.

Октябĕр революцийĕн икĕ вунăçулăх опычĕ çинче рабочисемпе хресченсен миллионĕсем нумай çĕнĕ ĕçе вĕренчĕç, хăйсен вăйĕсем çине урăхла пăхма пуçларĕç, хăйсем çĕнтереме пултарнине ĕненмесĕр тăрас тĕшмĕше пăрахма тытăнчĕç—çавăнта пулат те пирĕн çĕнтерӳвĕн чи паха тата чăн-чăн **пĕтĕм тĕнчелĕ** пĕлтерĕшĕ.

II. Капиталисăмпа ăмăртни

Пирĕн çĕршыври социалисăм ăнăçувĕсене ăнланмашкăн çак кунсенчи Совет Союзне революцичченхи Российйăпа танлаштарас пулат. Мĕнле пулнă пирĕн çĕршыв тата халĕ вăл мĕнле?

Революцичченхи Российйăра влаçра капиталиссемпе помещиксем тăнă, вĕсен пуçĕнче патша тăнă, ăна халăхсем хушшинче „Российйăн пĕрремĕш вырăнта тăракан помещикĕ“ тесе йат панă. Российйă кайа йулнă, пуринчен ытларах çĕрĕçлĕ, çĕршыв пулнă. Промышленнăç аталанувĕ вăйсăр пулнă та нумай йенпе ытти государствăсенчи промышленнăçран кайа йулса пынă. Унчухнехи Российйă çинчен Ленин: „Çав тери, курман-илтмен тери кайа йулнă, кĕлмĕçлĕ те çурма-чурăс çĕршыв, производствăн кучухнехи ордийĕсемпе Англирен тăватă хут йапăхтарах, Германирен пилĕк хут йапăхтарах, Америкăран вунă хут йапăхтарах авăрланнă çĕршыв“, тесе каланă. Уйрăмах йăвăр промышленнăç,—çĕркăмрăк, нефтă, руда, тимĕр-тăмăр, машинăсем, хими продукчĕсем пек çав тери кирлĕ продукцийе туса кăларакан пормышленнăç,—кайа йулса пынă. Çĕр айĕнчи пит те пысăк пуйанлăхсемпе начар усă курнă. Çитменне тата промышленнăçăн чи шултра отрăçлисенче тĕп хуçасем вырăс капиталисĕсем мар, урăх патшалăх капиталисĕсем пулнă. Хăйсен фабрикĕсемпе завочĕсем валли машинăсемпе тĕрлĕ хатĕрсене чи ытларахăшĕнче йутçĕршывсенчен туйанса тăнă. Çĕршыв промышленнăç тĕлĕшпе кайа йулса пыни пур ĕçре те паларса тăнă.

Йалта пĕтĕмĕшпех помещиксемпе кулаксем, урйадниксемпе земски начальниксем пуçпулса тăнă. Ленин сăмахĕсемпе каласан ĕç акă мĕнле тăнă:

„70 миллион тесетина йахăн çĕр 30.000 шултра помещиксен аллинче тата çавăн чухлĕ çĕрех 10 миллион хресчен килĕсен аллинче тăнă—картинăн тĕп фонĕ çавăн пек“.

Темиçе миллион хресченсем пачах çĕрсĕр, çĕр акмасăр пурăннă. Хресченсен ытларахĕшĕ çĕр хĕсĕклĕхне пула терттленсе пурăннă. Йалăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ выçă ларакан чухăнсем пулнă. Чухăнсемпе вăтам хресченсен чи ытларахĕш массийĕ хăйсен тата помещиксенчен тара клнĕ çĕр таткисене авалхи аслашĕсен мелĕсемпе сухапуçĕпе ĕçлесе тăнă. Чылай вырăнсенче йалта баршчинă системи, урăхла каласан, хресченсем пĕр-пĕр çĕр таткисемшĕн помещиксен çĕрĕсене хăйсен начар ĕçхатĕрĕсемпех ĕçлесе пурăнас системă, сарăлнă пулнă.

Октябĕр революцийĕ империалисăмлă

вăрçă тăваттăмĕш çула кайсан пулчĕ. Ку вăрçă халăх хуçалăхне йухăнтарса йачĕ тата халăх массисен пурнăçне тата та ытларах йăвăрлатса çитерчĕ. Кун çумне часах çĕнĕ инкексем хутшăнчĕç, мĕншĕн тесен помещиксемпе капиталиссем, йутçĕршыв интервенчĕсем пулăшнипе пире вăрăм вăхăта граждăн вăрçине кӳртсе йачĕç, ку вăрçă та виçĕ çул ытла пычĕ. Граждăн вăрçи пире калама çук пысăк тăкаксем куртарчĕ. Граждăн вăрçи пĕтнĕ тĕле промышленнăç, чукунçулсем тата йалхуçалăхĕ пĕтсе ларма пуçласа таранах чакса вăйсăрланчĕç. Йалхуçалăхĕ пурĕ те вăрçăченхи продукцин виç пайĕнчен иккĕшне аран туса тăркаланă. Промышленнăç тата та ытларах чакнă та 1920 çулта вăрçăченхи продукцин улттăмĕш пайĕнчен те сахалтарах туса кăларнă.

Çавăн пек йухăну пулнă чухне ĕнтĕ тытăнчĕ Совет влаçĕ халăх хуçалăхне ура çине тăратма, йалхуçалăхпе промышленнăçа, транспăртпа суту-илӳве çĕклеме. Нумай-нумай çулсем кирлĕ пулĕ пек туйăначчĕ. Большевиксен тăшманĕсем усал çилĕпе савăначчĕç. А чăннипе ĕç мĕнле килсе тухрĕ-ха? Ĕç акă мĕнле килсе тухрĕ: пирĕн çĕршыв ĕçсынийĕсем çав задачăна кĕске вăхăт хушшинче çĕнтерӳлĕ татса хучĕç.

Пĕтĕм шултра промышленнăç продукцийĕ (1926—27 çулти хакпа шутласан) 1913 çулта 11 миллиард тенкĕлĕх пулнă пулсан, 1920 çулта ĕнтĕ 1,7 миллиард тенкĕ йулаччен чакнă пулсан, 1937 çулта вăл 90 миллиард тенкĕрен иртсе кайат. Ку, промышленнăç продукцийĕ вăрçăченхи виçепе танлаштарсан 8 хутран та ытларах ĕнтĕ ӳснине пĕлтерет. Халĕ калани çумне тата çакна хушăр—промышленнăç продукцийĕн асăннă вăрçăченхи виçине епĕр 1926 çулта кăна çитрĕмĕр. Çапла вара, вăрçăченхи виçепе танлаштарсан промышленнăç продукцийĕ сакăр хут ытларах ӳсесси вăл йулашки вуннĕр çул хушшинче пулнă ĕç. Халĕ промышленнăçăн мĕн пур отрăçлисенче ĕç тытса чарми утăмпа пырат. Чылай отрăçĕлсене, кучухнехи малта тăракан техникăна ĕçе кӳртсе, тĕпрен реконструкциленĕ. Промышленнăçăн шултра отрăçлисене чылайĕшне: машинăсем тăвакаппине, хими отрăçлине, металлургийе т. ыт. те çĕнĕрен туса лартнă.

Революцичченхи Российйă промышленнăçĕ ытти çĕршывсен хушшинче тĕнчере пиллĕкмĕш вырăнта, Йевропăра тăваттăмĕш вырăнта тăнă. Халĕ про-

(Йулашки 3-мĕш страницăра)

ОКТĂБЕР РЕВОЛЮЦИЙĔ ÇИРĔМ ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ТĔЛЕ

В. М. МОЛОТОВ

1937 çулхи нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче Пысăк театрта чаплă заседанире тунă доклад

мышленнăç валовой продукции йенпе Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем кăна ССР Сойузĕнчен малти вырăнта тăраççĕ. Совет Сойуз. промышленнăçĕ Йевропăра пĕррĕмĕш вырăна тухрĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Рабочисен пурнăç йĕркин условийĕсенче пит те пысăк улшăнусем пулчĕç. Вунă çул кайарахах ĕнтĕ пирĕн миллион çурă безработнăйсем пулнă. Халĕ ак, темиçе çул хушши ĕнтĕ пирĕн безработицă çук, безработнăйсем çук. Ку ĕнтĕ—Америкăн Пĕрлешӳлĕ Штатсенче безработнăйсем 9—10 миллион, Германире безработнăйсем 3 миллион ытларах, Англире безработнăйсем 2 миллион пулнă чухне. Октăбĕр революцийĕ вунă çул тултарнă тĕле Совет влаçĕ промышленнăçри рабочисен ĕçкунне çичĕ сехете таран чакармала туни çинчен пĕлтерчĕ, çав решенийе пур нăçа ун чухнех кӳртнĕ, çĕрайĕнчи тата хăшпĕр йăвăр ĕçсенче пирĕн йалаван ĕçкунĕ ултă сехет пулни çинчен каламастпăр та ĕнтĕ. Капиталисăм чухне рабочисем нихăш çĕршывра та çавăн пек кĕске ĕçкунĕ çинчен ĕмĕтленме пултараймаççĕ. Промышленнăçра ĕçлекен рабочисен шучĕ тата вĕсен ĕçукçийĕ пирĕн çĕршывра пĕрмайах ӳссе пырат. 1928 çултах та ĕçукçин пĕтĕм фончĕ 8 миллиард тенкĕрен нумай мар ытларах пулнă, кăçалхи 1937 çулта ĕçукçин фончĕ 80 миллиард тенкĕрен ытларах пулат, урăхла каласан пĕр вунă хута йахăн ӳсет. **(Алă çупаççĕ).**

Есĕр пĕлетĕр, Октăбĕр революцийĕ 20 çул тултарнă йачĕпе, ĕçукçи сахал илекен рабочисен ĕçукçине ӳстерессипирки правителствă декретне пичетлесе кăларнă, çав рабочисен ĕçукçине çак çулăн йулашки икĕ уйăхĕ хушшинче ӳстерсе тӳлеме 100 миллион тенкĕ йатарласа уйăрса хунă, 1938 çул тăршшинче тӳлесе пыма 600 миллион тенкĕ палăртнă. **(Алă çупаççĕ).** Çав хушăрах мĕн пур капиталисăмла çĕршывсенче: Германире те, Италире те, Йапонире те, Пĕрлешӳлĕ Штатсенче те, Англире те йулашки çулсенче рабочисен ĕçукçийĕ ӳсме мар, чакса пынă.

Кусем пурте çакна питтĕ аван кăтартса параççĕ: Совет Сойуз промышленнăç ӳсĕмĕн ăнăçувĕсем, социалисăмăн ытти ăнăçувĕсем пекех, рабочи массисен пурнăçне тĕпрен лайăхлатасси патне илсе пыраççĕ.

Пирĕн йалхуçалăхĕнче—техникăра та, ĕçе организацилессинче те, — чăн-чăн революци пулчĕ. Йулашки çулсем хушшинче йалхуçалăхĕ колхозсемпе совхозсем тăва-тăва лартса шултра социалисăмлă хуçалăх пулса тăчĕ. Колхоз стройĕ пуçпех çĕнтерчĕ. Машин-трактор станцийĕсем хăйсен машинĕсемпе пур колхоз уйхир ĕçĕсене те пекех ĕçлесе тăраççĕ. Колхозсемпе совхоз хуçалăхĕсенчи тракторсен хисепĕ 450 пине çитрĕ, вĕсен вăйĕ халĕ 8 миллион лаша вăйĕнчен иртет. Комбайнсем уй-хирте 120 пинтен ытларах ĕнтĕ. Кусемсĕр пуçне, колхозсемпе совхозсенче 120 пине йахăн грузовой автомобилсем ĕçлеççĕ.

Ĕлĕкреппех хресчĕнсен аллинче пулнă çĕрсем çумне совет влаçĕ хресченçене 150 миллион гектартан ытларах помещиксен, хысиан тата монастырсен пулнă çĕрĕсене туртса илсе пачĕ. Ӳсет колхозсемпе совхоз уйхирĕсен тырпул тухăçлăхĕ. Ку çулта епĕр 7 миллиард пăта йахăн тĕш тырă пухса илтĕмĕр **(алă çупаççĕ),** кун чухлĕ тырпул туса илнипе пирĕн çĕршыв нихăçан та ĕнтĕ курманпĕлмен. Чылайах ӳсрĕ çĕрмамăкĕпе сахăр кăшманĕн тухăçлăхĕ. Пĕтĕм йалхуçалăх фрончĕпе тырпул тухăçлăхне ӳстерессишĕн, йалхуçалăх ĕçтухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешӳ пырат.

Революциччехи Российăра хресченсен ытларахăшĕ выçă ларакан чухăнсем пулнă. Вунă çул кайарахах ĕнтĕ, йалăн виççĕмĕш пайĕнчен кайа мар чухăнсем пулаççĕ тесе шутлаттăмăр епĕр. Халĕ ĕнтĕ йалта чухăнсем пирĕн текех çук. Чухăнсем пĕтĕм ĕçйалĕпе пĕрле колхозсенче çĕнĕ, чăннипех пуйан та чăннипех культуралă, пурнăç тăваççĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Колхоз хресченĕсемшĕн совет влаçĕ тăрăшни ку çулта йатарласа чылай çĕнĕ ĕçсем тунинче палăрчĕ. Государствăна сĕт парас тĕлĕшпе нумайах пулмаст пичетлесе кăларнă колхозниксем ваçҫи лҫотăсем çинчен каласа тăмасăр та, ку çулта государствăна тырпул парас тата МТС-сене ĕçленĕшĕн натурилатă тӳлес нормăна пит те хытă чакарнă. Нормăна чакарни çав хăйех те пĕлтĕрхин шайĕнчен 20 проц. ытла пулат. Колхозсене иртнĕ çулсенче государствă тырă кивçен панисене (ссуда) калла тавăрса памала мар тунă. Тĕш тырă тĕлĕшпе панă çав мĕн пур лҫотăсем пĕр çак çулта кăна 600 миллион пăта йахăн пулат, ку тырă халь колхозсемпе колхозниксен аллинчех йулчĕ. Хресченсем лайăх пурăнччĕр тесе капиталисăмлă, çĕршывсенче çавăн пекех тăрăшни çинчен, темĕн, епĕр илтмен.

Антив ĕнтĕ танлаштарччăр хресченсемпе рабочисем социалисăмпа капиталисăм хушшинче пыракан ăмăртура тĕрĕслĕх кам йенче тăнине. Антив рабочисемпе хресченсем çавăнтан хăйсен вывăчĕсене туччăр. Çав вывăдсем капиталисăмшăн усăлă мар, анчах ун вырăнне пирĕн стройшăн усăлă пулĕç. **(Алă çупаççĕ).**

Совет Сойузĕ хуçалăх ӳсĕмĕн пĕтĕмĕшлĕ палăрăмне епĕр çĕршывăн халăх дохочĕ ӳснинче куратпăр. Пурте пĕлеççĕ патша Российĕнчи халăхăн вунă пайĕнчен тăххăрĕшĕ сахал пурлăхлă тата пурлăхсăр массăсем пулнă, вĕсен аллине халăх дохочĕнчен пĕр чĕрĕке йахăн лекнисене çавăрса чиксе тăнă. Унтан вара ĕç тĕпренех улшăнчĕ. Халĕ пĕтĕм халăх дохочĕ ĕçсыннисен аллине кайат, кунпа пĕрлех халăх дохочĕн 99 процентĕ социалисăмлă хуçалăхра ĕçлекен рабочисен, служăщисен тата хресченсен аллине кайат, доходсен çĕрĕмĕш пайĕ кăна йединоличниксемпе кооперациене пĕрлешĕнмен кустарсенчен тăракан ĕçсыннисен тӳпи пулат. Вăрçăччехи вăхăтпа танлаштарсан халăх дохочĕн пĕтĕмĕшле хисепĕ çак çулта пилĕк хут ӳсрĕ. Фактсем çавнашкал, вĕсем çинчен пĕлес пулат.

Пĕрик-виç сăмах пирĕн çĕршывăн культуралă ӳсĕмĕ çинчен.

Акă чи пахарах цыфăрсем. Мĕн пур шкулсенче вĕренекенсен пĕтĕмĕшле хисепĕ 1914 çулта 8 миллион пулнă шутран пĕлтĕр 38 миллиона ӳссе çитрĕ. Çапла вара, ӳсĕм 4,7 хут пулнă. Узбек, Таджик, Туркмен, Киргиз республикисем пек республикăсенче вĕренекенсен хисепĕ вуншар хутшар ӳснĕ. Пуçламĕш шкула халь пур ачасем те çӳреççĕ. Вăтам шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ вăрçăччехи хисеппе танлаштарсан 18 хут ӳснĕ. Аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ пилĕк хута йахăн ӳснĕ. Халĕ пирĕн аслă шкулсенче 540 пин студент вĕренет. Ваттисене пĕтĕмĕшле пĕлӳве вĕрентекен шкулсем аплăн саралса кайрĕç, вĕсенче 9 миллиона йахăн çын вĕренет. Çакăнта асăннă 38 миллион вĕренекенсемсĕр пуççăр тата рабочисемпе колхозниксем ваҫҫи организациленĕ тĕрлĕ специальнăй курссенче 6,3 миллион çын вĕреннĕ тата шкула çӳрес умĕнхи учрежденисенче хатĕрлӳвлĕ вĕренӳве 4,3 миллион ачасем çӳресе вĕреннĕ.

Хаçатсен хисепĕ, кĕнекесем кăларасси тата вĕсен тиражĕсем пумай хут ӳсрĕç. Национальнăçсен чĕлхипе тухакан хаçатсемпе кĕнекесен тиражĕ уйрăмăнах хăвăрт ӳсет. Ĕлĕк тĕттĕм те йăвăр пурнăçпа пурăннă халăхсен нацилĕ культури Совет влаçĕ чухне чăнласа чечекленсе вăйлăн ӳсме пуçларĕ. Культуралă строителствăн пысăк çĕкленӳвĕ çинчен пирĕн çутта кăларас ĕçе кайакан расходсем ӳсни каласа парат. Йулашки 10 çул хушшинче çутта кăларас ĕçе кайнă расходсем пурте пĕрле 33 хут ӳснĕ. **(Алă çупаççĕ).** Çав расходсем кăçалхи 1937 çулта 18 миллиард тенкĕрен иртсе кайаççĕ.

Антив çав фактсемпе танлашма тапаçланса пăхчăр буржуалă çĕршывсем. **(Алă çупаççĕ).** Çав çĕршывсенчен пĕри те çав цыфăрсене хирĕç культура йенпе хăйсен ĕçĕсене мĕн чухлĕ те пулин лайăхлатнине кăтартса паракан цыфăрсем тăратма пултараймаççĕ, ун вырăнне, хăйсен культуралă строителствинче йулашки 10—20 çул тăршшинче малала мар, кайала кайнă çĕршывсем сахал мар тупăнаççĕ.

Мĕн çинче никĕсленсе тăраççĕ-ха совет стройĕн çав ăнăçувĕсем?

Октăбĕр революцийĕн мĕн пур ытти ăнăçувĕсем мĕн çинче никĕсленсе тăраççĕ, çавăн çинчех никĕсленсе тăраççĕ ку ăнăçусем те. Вĕсем, чи малтан, пĕтĕм социалисăмлă строителствăна йертсе пыракан большевиксен партийĕн тĕрĕс политикки çинче никĕсленсе тăраççĕ. **(Алă çупаççĕ).** Социалисăмăн мĕн пур ăнăçувĕсенче, пирĕн пĕтĕм çĕнтерӳсенче ленинисăмăн пурне те çĕнтерекен вăйне куратпăр епĕр. **(Алă çупаççĕ).** Ленинисăма шанчăклă тăнипе çĕнтертĕмĕр епĕр. **(Алă çупаççĕ).** Çавна пире Сталин йулташ вĕрентнĕ, вĕрентет те. **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Ленин—Сталин партийĕ пире çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне илсе пычĕ: Октăберти восстани кунĕсенче; империалисăмлă вăрçă вӳчĕнчен тухма кирлĕ пулнă тапхăрта; граждан вăрçинĕ интервентсене хĕçпăшалпа хирĕç тăрса хăваласа йанă паттăрлă çулсенче; НЕП-а куçнă чухне, епĕр, сăмах каларĕшле, çĕнĕ релсăсем çине куçнă чухне; çĕршыва социалисăмлă индустриализацилессине сарса пынă чухне; хресченсем коллективизаци çулĕ çине куçнă чухне; пирĕн çĕршывра социалисăм пуçпех çĕнтернĕ çулсенче. Епĕр пысăк йăварлăхсем витĕр тухрăмăр тата сахал мар хĕсĕк пурнăç тӳссе ирттертĕмĕр. Пирĕн, пĕр хамăр вăйсем çине кăна шанса, позици хыççăн позици çапăçса илмеле пулнă. Пирĕн пĕтĕм политикăра çул кăтартса пыракан çăлтăр вăл пролетариат диктатурине хресченсемпе сойуз тунă никĕс çинче тĕреклетсе пырас Ленин идейи пулнă. 1921 çулта Ленин питте хытă вĕрентсе хушнине:

„10—20 çул хресченсемпе тĕрĕс çыхăнса тăни пултăр, вара (пролетарилĕ революцисем,—вĕсем ӳссе пыраççĕ,—пуласси вăраха кайсассăн та) пĕтĕм тĕнче калăшĕпе çĕнтерӳ пирте пулат, унсăрăн 20—40 çул шургвардейцăсен террорĕнчен асап курса пурăнма тивет“, тенине епĕр йаланах астуса тăнă.

Епĕр Ленин çапла хушса хăварнисене çавăнпа çав тери ăнăçлăн пурнăçа кӳртсе пытăмăр, мĕншĕн тесен пĕтĕм пирĕн ĕçе, пĕтĕм епĕр ĕçлессе, Ленин ĕçне малала илсе пыма тивĕçлĕ çын, социалисăмлă революци пирки Ленин идейисене малала аталантарнă заслугăлă çын—пирĕн Сталин йертсе пынă. **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. „Сывă пултăр Сталин йулташ“. „Урра“ тесе кăшкăраççĕ).**

Хамăр ĕçĕн ăнăçувĕсене революци тăшманĕсене, ленинисăм тăшманĕсене хирĕç пынă çапăçура епĕр кĕрешсе илтĕмĕр.

Парти ĕретне хĕсĕнсе кĕрсе кайнă тăшмансем тата пур тĕрлĕ буржуалă перерожденцăсем, Троцки, Рыков, Бухарин йеврĕлĕ провокатăрсемпе шпионсем пире тĕрĕс çул çинчен тĕртсе антарас шутпа, партийе пĕррĕмĕш пролетарилĕ революцийĕн йăварлăхĕсем умĕнче калла чактарас шутпа, хайаррăн атакăсем туса пынă. Çавăн пек пире хирĕç кĕрешекенсем троцкиссем кăна мар, тата мĕн пур çав сылтăммисем, сулахайисем, зиновйевцăсем, бухаринцăсем те тата ытти Ленина хирĕçле ушкăнсем те çавăн пекех пулнă.

Вĕсене большевиксен ĕретĕнчен шăпăрпа хăвса кăларăччен малтан пире чылай çулсем тăршшинче партире тата рабочи клас хушшинче калама çук нумай ăнлантарса парас ĕç тума, парти пĕрлĕхне сыхласа тăма тата хамăр ĕретсене буржуазин пĕтĕм çав агенчĕсенчен гасатма сахал мар ĕçсем тума тивнĕ. Революци çакна кăтартса пачĕ: парти ĕретне çавăн пек тăшмансем сахал мар кĕрсе кайнă, а вĕсенчен хăшне-пĕрне пирĕн организаципе патша охранкинех те туррĕм панă пулнă, çавăн пекех тата йут çĕршывсенчи разведкăсем йанă пулнă.

Пирĕн умра çакăн пек тĕп задачă тăнă: рабочи класăн хресченсемпе тунă союзне сыхласа усрасси, çав вăхăтрах социалисăмлă индустрийе, пĕтĕм социалисăмлă строителствăна малала илсе пыракан вăй пулса тăракансене, çĕршыва ытла та нумай кала пулнинчен, економика тĕлĕшпе кайа пулнинчен, техникă тĕлĕшпе кайа йулнинчен, культурăпа çар ĕçĕ тĕлĕшпе кайа йулнинчен, чи кĕске вăхăтра мала кăлармашкăн кирлĕ хăвартлăхсемпе çĕклентерессе шулна. Çапла ĕçлеме пире шалти тата уйрăмăнах пĕтĕм тĕнчери лару-тăру туррĕм хушса тăнă. Палан Октăбĕр революцийĕн çирĕм çуллăхĕнче, епĕр çирĕппĕн, пĕр каппанас тавас шухăшсăр çакна калама пултаратпăр: тĕпрен илсен çав задачăна епĕр ăнăçлăн татса патăмăр. **(Алă çупаççĕ).** Апла мар пулнă пулсан, пирĕн халь халăх хуçалăхĕн чи паха отраслĕсен техникă тĕлĕшпе реконструкцилес йенпе хăй вăхăтĕнче палăртса хунă плана епĕр пурнăçа кĕртнĕ ĕнтĕ тесе калама май пулман пулĕччĕ. Пирĕн колхоз стройĕн çĕнтерӳвĕ те, пирĕн революцийĕн иккĕмĕш вунăçуллăхĕн чи пысăк çĕнтерӳвĕ пулса тăраканскер те, пулман пулĕччĕ.

Анчах çавсем капиталисăмпа пыракан ăмăрту ыйтувĕ пиренпĕн татăлса та тăнине ĕнтĕ пĕлтермеççĕ-ха. Ку ыйту таталман анчах мар—ăна урăхçĕршывсенче социалисăм çĕнтермесĕр пĕтĕмĕшпе татса пама та çук.

Марксисăм пире çакна вĕрентет: експлоататăрсене сирпĕтсе антарнă хыççăн, клас кĕрешӳвĕ вайсăрланмаст кăна мар, а, йăлтах урăхла, тата та ытларах çивĕч формăсемпе пулса пырат. Ку, тăшманла капиталисăмлă йĕри-тавралăхра социалисăм тăвакан пĕррĕмĕш государствăшăн пушшех те тĕрĕс. Социалисăмшăн тăшманла вăйсем социалисăмпа кĕрешесре çав мĕн пур тулашри йĕри-тавралăхран тата кашни уйрăм капиталисăмлă çĕршывран вăй илсе тăнине, ăнланма йăварах мар пек, тупăнат.

Епĕр анчах мар хамăр аталанува капиталисăмлă çĕршывсенче ĕçсем мĕнле тăнипе танлаштарса пăхатпăр. Çавна империалисăм лагерĕнчи пирĕн тăшмансем те тăваççĕ. Çав танлаштаруран епĕр **хамăр** ваҫҫи практикăлă вывăдсем тăватпăр, а вĕсем урăх, пĕтĕмпех урăхла вывăдсем тăваççĕ. Çакă паллă, пирĕн çĕршыври социалисăм ăнăçувĕсем умĕнче капиталисăм хĕçпăшала хăй пăрахса парăнас çук. Социалисăм ăнăçувĕсем буржуази лагерĕнче уртарса йаракан тарăхтару, пур шанчăка çухатассине çуратакан тарăхтару, кăларса тăраççĕ. Пирĕн çавна, ăна факт вырăнне хурса, шута илес пулат.

Çĕнтерӳлĕ социалисăмпа уççăн пыракан ăмăртура, сăмах каларăшле, мирлĕ ăмăртура позици хыççăн позици çухатса пырса буржуази, уйрăмăнах унăн фашисла вăрă-хурахсем, пур тата пур тĕрлĕ подкопсем тăвас мелпе, пур тата пур тĕрлĕ ирсĕрсем вăрттăн тăвас мелпе кĕрешме тытăнаççĕ. Çавă, тахçанах ĕнтĕ шпионо-троцкисăм, шпионсен, сăтăрçăсен, провокатăрсен тата террориссен ушкăнĕ пулса тăнă троцкисăм тĕслĕхĕ çинче пит те уççăн курăнат. Хальхи троцкисăм тупсăмне Сталин йулташ калама çук пит те аван кăтартса пачĕ. Троцкисăм вăл программăлă тата хăйĕн сăнпитне массăсенчен пытарман политикăлă йухăм мар. Шпионо-троцкисăм — вăл разведчиксен, çынвĕлерепсен тата сăтăрçăсен банди, вĕсене, халăх чи усал тăшманĕсене йепле пĕр хĕрхенӳсĕр çапса хуçнă пекех, çапса хуçас пулат. **(Алă çупаççĕ).** Мĕн пур çав ирсĕрсен, — вĕсене йутçĕршыв разведкисем кирек те мĕн чул тара тытччăр,—епĕр, паллах, хӳрисене хĕстерсе лартăпăр...

Çавăнта та епĕр пире лăпкăн ĕçлеме кирлĕ тата тĕп фронтсем тăрăх капиталисăмпа пыракан пирĕн ăмăрту ăнăçулă пулма кирлĕ условисенчен пĕрне куратпăр.

Капиталисăмпа пыракан тĕп ăмăрту пайан хуçалăх облаçĕнче пырат, çавăнпа çав ăмăртура тĕп виçе вырăнче ĕçтухăçлăхĕ пулса тăрат. Епĕр кунта та: „ĕçтухăçлăхĕ, вăл йулашкинчен, çĕнĕ общиествăлă строй çĕнтерӳвĕшĕн чи паха, чи кирлĕ йапала“, тесе Ленин кăтартса панине астăватпăр.

Хăйсен ĕçĕсене кăтартулă туса пыракан фабрикăсемпе заводсем пирĕн пур пулин те ĕçтухăçлăхĕ тĕлĕшпе пирĕн çителĕклĕ ăнăçусем пур тесе калама епĕр пултараймастпăр-ха. Промышленнăçăн паха отраçлисенче чылайĕшĕнче епĕр, техникă тĕлĕшпе малта пыракан капиталисăмлă çĕршывсенчен, уйрăмăнах Америкăран, кайра пыратпăр-ха. Заводсемпе фабрикăсене, промышленнăç отраçлисене пĕтĕмĕшпе ура çине большевикла тăратмашкăн стахановецсен опычĕпе нумай тĕлте усă курма епĕр пултараймарăмăр-ха.

Анчах ку облаçре тунă пирвайхи чылай пысăках ăнăçусем çинчен нимĕн шарламасăр иртсе кайма, Совет Сойузне ытти çĕршывсемпе танлаштарнă чухне пушшех те, йурамаст. Акă ĕнтĕ 7—8 çул Америкă, Германи, Англи пек капиталисăмла пысăк çĕршывсем пĕр рабочи çулталăк хушшинче мĕн чухлĕ тавар туса кăларма пултарни тĕлĕшпе пĕр вырăнта пекех тапăртатса тăраççĕ. Çав тапхăр хушшинчех, урăхла каласан 1929 çултанпа, пирĕн промышленнăçри рабочин ĕçтухăçлăхĕ икĕ хутран та ытларах ӳсрĕ.

Пĕр 1936 çулта çеç, — стахановла йухăм пуçланнă хыççăн пĕррĕмĕш çулта,—ĕçтухăçлăхĕ пирĕн шултăра промышленнăçра 21 процент ӳсрĕ. Пирĕн çĕршывра, кризиссем пулман çĕршывра, ĕçтухăçлăхĕ пĕрмай ӳссе пырассине тытса тăракан чăрмавсем çук. Йалтах урăхла, йулашки çулсенче туса лартнă заводсенче рабочи кадрсем техникăлă вĕренӳн кирлĕ срокне вĕренсе иртерчĕç те халĕ ĕçтухăçлăхне чăнласа хăпартма пултарĕç ĕнтĕ тесе халĕ тин калама пултаратпăр епĕр. Çапла пуласса ĕмĕтленсе кĕтни пирĕн хуçалăхла, инженерла-техникăлă тата профсойузлă кадрсем хăйсен задачисене кирлĕ пек ăнлансан, ĕçе тытса-чарса тăракан бӳрократла чăрмавсене ватса çĕмĕрсен тата стахановецсен ĕçне организацилеме чăнласах тытăнсан, пĕтĕмпех пурнăçа кĕрĕ.

Пирĕн йалхуçалăхĕн калама çук пысăк майсем пур. Халĕ колхозсенче трактора кăна мар, комбайнсене те вĕренсе алла илнĕ çынсем сахал мар. Çакна каланиех те çителĕклĕ: 4 çул кайарах çеç МТС-сенче пĕр комбайн çулталăк хушшинче мĕн чухлĕ ĕçлеçине вăтамран илсен комбайн пуçне пурĕ те 70 гектар кăна тивнĕ, пĕлтĕр ĕнтĕ çав хисеп 350 гектара çитнĕ, урăхла каласан, виçĕ çул хушшинче пилĕк хут ӳснĕ.

Пуринчен çавăнтан практикăлă вывăд тăвар та, пуринчен малтан çакна йышăнар: ССР Сойузĕн чиккисен тулашĕнче ĕçлекен ун пек заводран сахал мар, **ытларах та лайăхрах** продукци туса кăларакан завод кăпа пирĕн социалисăмла ĕçлекен завод пулат тесе шутлар. Пирĕн кадрсем техникăна вĕренсе алла çавăрса илес ĕçре пысăк ăнăçусем турĕç ĕнтĕ. Çав ăнăçусене фабрикăсемпе заводсенче, социалисăмлă общиествăна тивĕçлĕ пысăк ĕçтухăçлăхĕ туса йарас пулат. Ун чухне вара капиталисăмпа пыракан ăмăртувăн тĕп фронтĕнче кĕрешӳ пирĕн майлă татăлĕ.

Промышленнăçра, транспортра тата йалхуçалăхĕнче **пысăк ĕçтухăçлăхĕшĕн** кĕрешӳве большевикла сарса йарасси—çавăн пек пулат ĕçе татса паракан задачă.

III. Малашлăхсем çинчен

Октăбĕр революцийĕ чи пуçламĕшĕнченех тăшмансем кăна мар, тата нумай пышлă суйа „туссем“ те вăл часах пĕтесси çинчен каласа тăнă. Пролетарилĕ революци Российăра хăй вăхăтĕнче пулнă революци мар, социалисăм пĕр çĕршывра çĕнтерме пултараймаст текен шухăпа уйрăмăнах час-час каласа тăнă. Çав буржуалă имшер тĕшмĕше хирĕç Ленин империалисăмăн уйрăмлăхĕсене хисепе илсе социалисăмлă революци çине ăслăлăхла, марксисла пăхассине тăратнĕ. 1916 çулта „Военная программа пролетарской революции“ йатлă статйинче Ленин çапла çырнă:

„Капиталисăм аталанувĕ тĕрлĕ çĕршывсенче калама çук пит те пĕртан мар та пĕр тикĕс мар пулса пырат. Таварлă производствă чухне урăхла пулма та пултараймаст. Çавăнтан пĕр тавлашусăр йышăнмали вывăд: социалисăм пур çĕршывсенче те пĕр вăхатра çĕнтерме пултараймаст. Вăл малтан пĕр çĕршывра йе темиçе çĕршывра çĕнтерет, а ыттисем хăшпĕр вăхăт хушши буржуалă çĕршывăнах йе буржуалă умĕнхи çĕршывăнах йулĕç“.

Ленинăн çав ăслăлăх тăрăх ĕненерӳлĕ кăтартса панă теорилĕ шухăшне практикăра та пĕтĕмĕшпех çирĕплетнĕ, пирĕн çĕршыври социалисăмăн чаплă миллионшар строителĕсем çирĕплетнĕ.

Епĕр, капиталисăмăн пĕтĕмĕшле кризисĕ саманинче, капиталисăмлă лагерьте хирĕçӳсем калама çук çивĕчленсе çитнĕ саманара, пурăнатпăр. Çав хирĕçӳсем çивĕчленсе кайнă пирки пĕтĕм тĕнчери пĕррĕмĕш империалисăмлă вăрçă пуçланса кайнă пулнă. Октăбĕр революцийĕ тĕнчери капиталисăма ишсе аркатассин пуçламĕшĕ пулнине, урăхларах каласан, пĕтĕм тĕнчери пролетарилĕ революцийĕн пуçламĕшĕ пулнине, хăйпе пĕлтерчĕ.

Çапла вара, пĕтĕм тĕнчери революци пуçланчĕ ĕнтĕ. Анчах вăл капиталисăмăн пĕтĕм сăнчăрĕ пĕр харăсах ванса арканас майпа мар, капиталисăмăн уйрăм ункисем саланса пырас майпа пуçланчĕ. Çавăн пек пĕррĕмĕш ункă вырăнче буржуалă-помещиклă Российă пулчĕ, ун вырăнне социалисăмлă государствă пулса тăчĕ.

Çавăнтан вара пролетарилĕ революци, пирĕн вăхăтри чи малта тăракан йавленийе, халăх массисен мĕн пур чăн-чăн прогрессивлă йухăмĕсен,—вĕсем йăлтах коммунисăмлă йухăмсем пулмасассăн та,—тĕрекĕ пулса тăчĕ. Пролетарилĕ революцире ĕçсыннисен демократилĕ прависемшĕн фашисăма хирĕç пыракан кĕрешӳ те, вăйсăр çĕршывсенче никама пăхăнса тăрас марришĕн империалисăмлă агрессăрсене хирĕç пыракан кĕрешӳ те халĕ тĕрек тупат. Прогресăн шанчăклă тĕрекĕ пулма пултармала çĕршывсем капиталисăмлă çĕршывсем хушшинче текех çук ĕнтĕ. Ватăлса йăшса çитнĕ капиталисăмшăн прогрессивлă ĕç ытларан та ытла йут йапала пулса пырат. Мĕн пур прогрессивлăн интересĕсене хӳтĕлес ĕçре, культурăпа нацилĕ прĕклĕхĕн интересĕсене хӳтĕлес ĕçре чи курăнмала вырăн халĕ пĕррĕмĕш социалисăмлă революци йышăнса тăрат. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).** Мĕн пур прогрессивли, мĕн пур тӳрĕ—демократили, капиталисăм çине шанса тăрассине пуçпех çухатса, ку йенпеле туртăнат. Çапла, историлĕ аталанувăн утăмĕпе капиталисăм, хăйĕн вырăнне ӳссе пыракан социалисăмлă революцийе парса, хăй пĕтесси патне пырат. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Пирĕн çĕршывра социалисăм **политикăла** облаçре 1917 çулти октăбĕр кунĕсенчех ĕнтĕ пĕтĕмĕшпех çĕнтернĕ. Çĕршыв **економикинче** социалисăм пуçпех çĕнтерни çинчен хресчен массисем колхоз çулĕ çине тăнăранпа, урăхла каласан, 7—8 çултанпа, калама пултаратпăр епĕр. Социалисăм **культура** облаçĕнче пуçпех çĕнтерни çинчен калама иртерех-ха. Кунпа çак факт çыхăнса тăрат: çынсен ăстăнĕнчи капиталисăм йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе пирĕн çав тери нумай ĕçлемеле пулат. Социалисăмлă культурăна анлăн çĕклентерсе пынипе кăна вĕсене ăнăçлăн пĕтерме пулат. Анчах ун вырăнне чăн-чăн социалисăмлă культура çулĕпе пыракан кашни утăм çиĕнчех палăрса тухакан хăйĕн резултачĕсене парат кăна мар, тата социалисăмран коммунисăма ӳссе куçма кирлĕ условисене те туса парат.

Стахановла йухăмăн пĕлтерĕшне пăхса тухса, „Сталин йулташ ак мĕн каланă: „вăл социалисăмран коммунисăма куçма условисем хатĕрлесе парат“ тенĕ. Сталин йулташ çав шухăша çав сăмахрах акă мĕнле сăлтавласа каланă:

„Паллă мар-им вара, стахановецсем пирĕн промышленнăçра новатăрсем пулса тăни, стахановла йухăм пирĕн индустрийĕн малашлăхĕ пулса тăни, унăн ăшĕнче рабочи класăн пулас культуралă-техникăлă çĕкленӳн пĕрчисем пурри, вăл пире çакăн пек çул: çав çулпа пырсан кăна социалисăмран коммунисăма куçма тата ăс-пуç ĕçлевĕпе ал-ура вăйĕн ĕçлевĕ хушшинчи хирĕçлĕхе пĕтерсе хума кирлĕ ĕçтухăçлăхĕн çӳлĕ виçине çитме пултармала çул уçса пани“.

Çавăнпа „рабочи класăн культуралă техникăлă виçине, инженерлă-техникăлă ĕçлев работникĕсен виçине таран ĕç çыннисен пĕтĕм массин культурлăхне çĕклентерни пе пĕрле „çĕклентерес“ задачă — вăл тĕп задачă, ăна татса паниччен пирĕн тĕп ăнăçусем килеççĕ.

Коммунисăм пирĕн пурнăçа совет влаçĕ çĕнтернĕренпе пырса кĕре пуçларĕ. Унтанпа çĕршыва социалисăмла çĕнĕле улăштарса пыма пуçланăранпа 20 çул хушши. Мĕн патне çырса çитрĕмĕр-ха епĕр? Пĕтĕмĕшле итог мĕнле?

Епĕр социалисăмлă общиествă турăмăр, унта експлоататăрсем ваҫҫи выран çук, експлоатаци ваҫҫи вырăн çук. Çĕнĕ, чи çӳлти, сăнарлă общиествă турăмăр. Пирĕн общиествăн икĕ класĕн хушшинчи çыхăпура, рабочисемпе хресчен-колхозниксем хушшинчи çыхăпура, харкăшу тата килĕштермеле мар хирĕçӳсем çук кăна мар, йăлтах урăхла, пурнăç условисем тăрăх, культуралă аталану тăрăх, вĕсем коммунисăм патнеле туртăнни тăрăх, пĕр-пĕрин патне çывхарса пырас процесс пулса пырат.

Пирĕн халăх çĕнĕле пурăнат, мĕншĕн тесен социалисăм пирĕн стройăн пур вырăнĕсене те пырса кĕрет. Çав çĕнĕ пурнăç ĕççыннисене çуцатлантарат, вĕсенче çĕнĕрен те çĕнĕ вăйсем çуратса кăларат. Çамрăксенчен, пирĕн ачасенчен, социалисăмлă общиествăн темĕн пек пысăк тата пĕрмайах ӳсекен задачăсене ăнăçулăн татса пама пултаракан ăру ӳсет.

Халăхăн мĕн пурри пурĕ те социалисăмлă пулса тăчĕ, тесе епĕр калама пултараймастпăр. Анчах чăн-чăн социалисăмли пирĕн куç умĕнчех халăхăн, халăх массине çывăххи пулса пырат. Тепĕр йенчен, коммунисăма хирĕçлисене пурне те, вăл практикăлă ĕçсенче пулат-и йе ăслăлăхлă-творчествăлă облаçра пулат-и, вĕсене пирĕн çĕршыври ĕççыннисем халăха хирĕçли вырăнне, халăхшăн йут вырăнне хурса шутланипе кашнинех курма пултарат. Коммунисла партин тата совет влаçĕн тăшманĕсене халăх тăшманĕсем вырăнне шутласси пирĕн патра йăла пулса тăчĕ. Аслă Совета суйлас тĕлĕшпе нумайах пулмаст пуçланса кайнă политикăлă кампани ĕнтĕ ĕççыннисем коммунисла партипе совет влаçĕ тавра çĕнĕрен тĕреклĕн пĕтĕçес ĕç пулса тăчĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Çавсем пурте мĕне пĕлтереççĕ? Çавă вăл пирĕн çĕршывра халăхăн **моральлĕ тата политикăлă шалти пĕрлĕхĕ**, социалисăмлă общиествăн моралĕ тата политикăла пĕрлĕхĕ халичченхи пулман таран пулса тăнине пĕлтерет. **(Алă çупаççĕ).**

Халăхăн çавăн пек пĕрлĕхне капиталисăмлă пĕр çĕршыв та пĕлмен тата пĕлмест. Капиталисăмлă общиествăна шалти хирĕçӳсем хавшатса тăраççĕ. Унта пуç пулса тăракан сахалтарахăш, експлоататăрла çӳлти сий, халăхран уйрăм тата ăна хирĕç тăрат, експлоатацири массăсене хирĕç тăрат. Буржуази хăйĕн стройне тытăнтарса тăма йаланах тулти хăрушлăхпа аплăн усă курат. Анчах унăн çав сăхманĕ те пирĕн вăхăтра пур çĕвисем тăрăх шатăртатса çурăлат. Пурин куçĕ умĕнчех капиталисăм тĕпсĕр шатăкала кусса пырат.

Пирĕн çĕршывăн телейĕ çакăнта: вăл, йăварлăхсенчен хăрамасăр, çĕрекен капиталисăмлă общиествăран вĕçерĕнсе тухрĕ. Акă ĕнтĕ, пĕтĕм етемлĕхĕн çутă пурнăçĕ патне пымали тĕрĕс çул хывма телей пире тивнине пĕлсе тăрса, епĕр çирĕм çул ĕнтĕ хамăрăн çĕнĕ çулпа пыратпăр, коммунисăм патнеле пыратпăр. Çавă вăл пирĕн çĕршыври массăсен ăстăнне ӳстерет тата ĕççыннисене пĕтĕçтерет.

Совет Сойузĕн халăхĕсен массисен моралĕ тата политикăлă пĕрлĕхне буржуалă помещикла классемпе интервентсене хирĕç пынă паттăрлă кĕрешӳвĕн тӳсĕмĕсенче туптаса тунă. Вăл рабочисемпе хресченсем халăх хуçалăхне хăпартас ĕçре тунă сойуз никĕсĕ çинче тĕрекленнĕ. Анчах експлоататăрсемшĕн тата çынна çын експлоатацилессишĕн пур алăксене те хупса лартнă социалисăмлă общиествă тунă хыççăн кăна халăхăн темĕн пек пысăк вăй пулса тăракан моральлĕ-политикăлă çĕнĕ пĕрлĕхĕн вăйĕ палăра пуçларĕ. Çавăн пек моральлĕ тата политикăлă пĕрлĕх, витĕрех тарăн интернационалисăмлăскер. Совет Сойузĕн халăхĕсене тата народнăçĕсене пĕр пĕтĕмлĕхе пĕтĕçтерĕ. Ытти çĕршывсенчи халăхсем те çавăнта хăйсен пулассăнне курса тăрĕç.

Халăхăн моральлĕ-политикăлă пĕрлĕхĕн пирĕн çĕршывра хăйĕн чĕр ӳт-пĕвĕ те пур. Социалисăм çĕнтерӳвĕсен символĕ пулса тăракан йат пур пирĕн. Çав йат çав хушăрах совет халăхĕн моральлĕ тата политикăлă пĕрлĕхĕн символĕ. Есĕр пĕлетĕр, вăл йат—Сталин **(Алă çупаççĕ. Пурте тăраççĕ. Сасăсем: „Сталин йулташа урра!“).**

Хамăр малашлăхсем çинчен каласа, епĕр, чи малтан, пирĕн çĕршыв мирлĕ аталанассине асра тытатпăр. Анчах мира пăссан, йытă сăнчăртан вĕçерĕнсе кайса пирĕн çине, пирĕн пӳрт çине сиксе ӳксен, епĕр хирĕç мĕн калăпăр? Епĕр хирĕç, калăпăр: антив тăшман социалисăмлă общиествăн моральлĕ тата политикăлă пĕрлĕхне тĕрĕслесе пăхма хăтлантăр! **(Алă çупаççĕ).**

Çак кунсенче хамăр туйăмсене тата шухăшсене пуринчен лайăхтарах простой, пур çĕршывсенчи ĕççыннисене те ăнланмала сăмахсемпе çапла палăртас:

Сывă пултăр Октăбĕр революцийĕ!

Маркс—Енгелс—Ленин—Сталин ăлăвне çӳлерех!

(Пурте тăраççĕ. Тăвăллăн алă çупаççĕ. Сасăсем: „Сталин йулташа урра!“).

Ӳкерчĕк çинче: Мускаври Л. М. Каганович йачĕпе тăракан 1-мĕш шарикоподшипник завод директорĕ Йа. С. Йусимпа Таганск районсовечĕн председателĕ П. Н. Пичугина Мускаври Пролетарски Суйлав Округĕн суйлав умĕнхи канашлувĕн президиумĕнче. (Сойузфото).

Районта 232 агитатор ĕçлет

ÇĔМĔРЛЕ, („Чăваш Коммунĕ" корр.). Пайанхи куна районĕпе „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренмели кружоксенчен: хулари суйлавçăсенчен—1622 çын, йалти суйлавçăсенчен—404 çын вĕренсе тухнă. Çак кунсенче вĕренсе тухакансен йышĕ нумайах ÿсмеле. „Болшевик" заводра, „Красноармейец" колхозра йулашки заңатисем пулса иртрĕç.

Уйрăмăнах суйлав саккунне вĕренессине „Болшевик" заводра аван организациленине палăртмала. Заводри парти организацийĕ (партком секретарĕ Феклистов й.) ку тĕлĕшпе политикă йенчен пултарулă коммуниссене агитатора çирĕплетнĕ. Кашни агитаторăн ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тарса, çитменлĕхсене çийĕнчех йусаса пычĕ. Ку таринчен кружоксенчен 356 çынна вĕрентсе кăларнă та ĕнтĕ, халĕ 724 çын вĕренет. Кусем те çак кунсенче вĕренсе пĕтереççĕ. Производствăра ĕçлекенсене вĕренÿве пурне те йавăçтарнă. Килхуçи арăмĕсем хушшинче те кружоксем организациленĕ.

Вырăс Улхашри агитгруппă та аван ĕçлет. Агитгруппă руководителĕ Булыгин коммунис ĕçе лайăх организацилеме пĕлнипе, суйлав саккуне вĕренме 500 çынна йавăçтарнă. Кружоксем аван ĕçлеççĕ, вĕренме 90—100 проц. çÿреççĕ. 3-шер заңати туса иртернĕ ĕнтĕ, нойабĕрĕн 12-мĕшĕнче йулашки заңатисем пулса иртрĕç. Халĕ вĕренекенсем суйлав саккунне йепле ăнланнине тĕрĕслеççĕ т. ыт. те.

Хутар суйлав участкинчи Мозйаков йулташ йертсе пыракан агитгруппă та аван ĕçлет. Кунта йатарласах помешчени пур. Ку помешченире йаланах суйлавçăсем пырса, ăнланман ыйтусене ыйтса пĕлеççĕ Кунтах политзаңатисем туса ирттереççĕ. „ССРС Аслă Советне суйламали Положени" çинчен вĕренмели кружоксенчен 173 çын вĕренсе тухнă, халĕ тата 650 çын вĕрентет.

Анчах çÿлте кăтартнă тĕслĕхсем пачах та, районта ССРС Аслă Советне суйлама хатĕрленессн çителĕклĕ пырат тенине пĕлтермест. Çитменлĕхсем куç умĕнчех. Чылай йалсоветсенче, учрежденисенче суйлав саккунне çийелтен çеç вĕренсе тухнипе ирттерсе йараççĕ. Акă Чăваш Улхаш суйлав участкинче ку таранчен те суйлав саккунне вĕренессипе ĕçе тытăнман. Пĕр уйăх кайала кунта 43 çынтан кружок организацилĕсе, пĕр заңати туса ирттернĕ пулнă. Çавăнтан урăх пĕр заңати те туса ирттермен. Колхозра йалсовет председателĕсем, комсомол организацийĕ пачах та ответлăха туймасăр лараççĕ. Районти агитаторсен курсĕнчен вĕренсе тухнисем те (4 çын) нимĕн те тумаççĕ. Ку йалсоветра суйлав участкин вырăнĕ те хатĕр мар, помещченисем тупса хатĕрлемен.

Çавăн пекех Тукас суйлав участки тăрах та парти райкомĕ çирĕплетнĕ коммунис Степанов й. ку суйлав участкине кайса та курман, ĕçсем мĕнле пынине пĕлмест. Йаланах „вăхăт çука" перет. Кунта та уйăх кайала организациленĕ кружоксем ĕçлеме пăрахнă, улшăну çук.

Деткомиçси заводĕнче, Чăвашснабсбытпа „Заготзернора" ĕçлекенсем хушшинче те суйлав саккунне вĕренессипе нимĕн те туман, ку таранччен пĕр çын та вĕрентсе кăларман, кружоксем те ĕçлемеççĕ т. ыт. те.

ПСК(б) Парти райкомĕ çак кунсенче Аслă Совета суйлама хатĕрленесси мĕнле пынине тĕрĕслесе тухнă хыççăн, ĕç çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ. Райком 34 коммуниса суйлав участкинчи агитколлектив руководителĕсем пулса ĕçлеме çирĕплетрĕ тата суйлав участкинчи доверенайсемпе канашлу туса ирттерчĕ.

Пайанхи куна районĕпе 420 кружок ĕçлет. Çак шутран 190 кружокĕ хулара шутланат. Районра кружоксенче 10.014 çын вĕренет.

Кружоксене пĕтĕмĕшпе илсен парти райкомĕ уйăрса çирĕплетнĕ коммуниссемпе комсомолецсем тата агитаторсен курсĕнчен вĕренсе тухнă çынсем йертсе пыраççĕ. Пĕтĕмпе районĕпе 232 агитатор ĕçлет.

Хар. Лисин.

Колхозниксем çĕнĕ суйлав саккунне вĕренеççĕ

Чăвашсен Коммунисла аслă йалхуçалăх шкулĕнчи парти комитечĕ пире, 11 студента, Шупашкар районĕнчи Шĕнерпуç йалсоветне „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" колхозниксене вĕрентме çирĕплетрĕ. Епĕ ку паха та ответлă ĕçе тăрăшсах тума тытăнтăм. Халхи вăхăтра „XI лет Октября" колхозри кружока йертсе пыратăп. Заңатисене каннă кун ирттеретĕп. Пайанхи куна 5 заңати ирттертĕм. Ватă колхозниксемпе колхозницăсем çĕнĕ суйлав саккунĕпе питĕ интересленеççĕ. Кружока 30 колхозникрен кайа çÿремеççĕ.

—Ĕлĕкхи вăхăтра пире Николай патша тĕттĕмре кулкасен пусмăрĕнче тытса усранă. Октăбĕрти революци хыççăн çеç пире, хĕрарăмсене арçынсемпе танаштарчĕç, государствă ĕçĕнче ĕçлеме май пачĕç, тет Варвара Йевграфова.

Фомина, Комиссарова, Терентйев йулташсем т. ыт. те пĕр заңати те сиктермеççĕ. Вĕсем кашни статйана теплĕн ăнланассишĕн тăрашса вĕренеççĕ. Епĕ хам суйлав кунчен кружокра вĕренекен колхозниксемпе колхозницăсене суйлав саккунне ăнланакан тăвассишĕн тăрăшса вĕрентетĕп. Халĕ пирĕн драмкружок çитес кунсенче колхозра спектаклĕ лартса пама хатĕрленет.

Агитатор Ем. Молоствов.

Суйлав Положенийĕн кĕнеки кашни килĕрех пур

Тури-Сăнарти (Йетĕрне р.) „Çĕнĕ пурнăç" колхоз кашни колхозник килне валли „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени" кĕнекине туйанса пачĕ. Колхозниксем халĕ çак кĕнекесем тăрăх Положенине тĕплĕн вĕренсе пырса, суйлава хатĕрленеççĕ.

Г. Федоров.

Тата çĕнĕ агитаторсем

Хĕрлĕ Чутай райкомĕ хал нумай пулмаст 80 агитатора пилĕк кунлă курс урлă вĕрентсе кăларчĕ. Халĕ ку агитаторсем йалсенче çĕнĕ суйлав саккунне колхозниксене ăнлантарса параççĕ.

Самарин.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителстви

Халех тумали ĕç

Чукунçул строителствинче релсăсем сарас тата релсăсем сарнă вырăнсене йакатса хăйăр сапса тикĕслес ĕçсем йулса пыраççĕ. Вăтамран релсăсем хывакан бригадăсен куллен виçĕ километр тăршĕ лини хывмала пулсан, халхи вăхăтра 600—700 метр тăршĕ çеç хывса пыраççĕ. Мĕншĕн-ха капла пулса пырат? Релсăсем сарас ĕçе хăвăрттăн пурнăçа кĕртсе пыма пур кирлĕ условисем те çителĕклĕ. Ăна хăвăрттăн пурнăçа кĕртме май пуррине кăтартакан тĕслĕхсем те сахал мар.

Релсăсем хывнă çĕрте квалификациллĕ рабочисем, стахановецсем шăтса ÿсрĕç. Акă Семен Тарасов, Салников йулташсем йертсе пыракан бригадăсенех илер. Тарасов бригадинчи çынсем пурте пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Кулленхи нормăна 140 процентран кайа мар тултараççĕ. Кудрйашов, Йемелйанов, Чугунов тата Йевдокимов рабочисем чукунçулне срукра туса пĕтерессишĕн чĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ. Епĕр,—теççĕ бригадăри рабочисем,—çула хывса пĕтеричченех ĕçлеме пулатпăр. Çула туса пĕтерсен те кунтах ĕçлеме йулатпăр. Пире Шупашкар хули ытти хуласемпе чукунçулпа çыхăнни савăнтарат.

Салников бригади те йулмаст. Унăн бригади нормăна йаланах ирттерсе тултарат. Çавăншăн ăна костумпа премиленĕ. Çавăн пекех Родионов, Петров, Жунулин, Садов тата ытти рабочисем те ĕç нормине 130 процентшер тултарса ĕçлеççĕ.

Рабочисем çапла нормăна тултарса ĕçленĕ вăхăтрах лини хывас ĕç кайа йулса пыни ĕç вăйĕ çителĕксĕрринчен килет. Кунта куллен 900 рабочи ытла ĕçлемеле пулсан, халхи вăхăтра 160 çын кăна ĕçлеççĕ. Кунăшкал пуласси Шăхасан тата Çĕрпÿ районĕсем ĕç вăйĕ тăратассипе сÿрĕк ĕçленипе пулнă. Комсомол организацисем те комсомолецсене релсăсем хывнă çĕре мобилизацилес тĕлĕшпе хăйсем çине илнĕ обйазателствăна пурнăçа кĕртмеççĕ.

Вăхăт кĕтмест. Районти организацисен тата комсомол Обкомĕн халех релсăсем хывнă çĕре ĕç вăйĕ организацилес тĕлĕшпе хĕрÿлĕн ĕçлеме тытăнмала.

Совет халăхĕн ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидачĕсем

Совет халăхĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата Ленин—Сталин аслă ĕçĕшĕн кĕрешекен малти борецсене тăратрĕ.

Округри суйлав комиççисем Союз Советне депутата суйлама кандидата йулашки кунсенче регистрациленисем хушшинче:

Совет Сойузĕн Геройĕ А. В. Беляков йулташ (Саратов йал суйлав округĕ); ССР Сойузĕнчи наукăсен Академийĕн вице-президенчĕ Г. М. Кржижановский йулташ (Куйбышев йал суйлав округĕ); УССР-чи Донецк облăçĕн Старо Бешев машинпа трактор станцин хĕрарăмсен трактор бригадин бригадирĕ тракторист-орденоносец П. Н. Ангелина йулташ (Донецк облăçĕнчи Амвросийев суйлав округĕ); паллă лотчик-испытател В. К. Коккинаки йулташ (Крым АССР-чи Керч суйлав округĕ); Новосибирск облăçĕн Чистоозĕр районĕнчи Йудинри машинпа трактор станцин комбайнер-орденоносецĕ И. А. Многолетний йулташ (Новосибирск облăçĕнчи Татар суйлав округĕ).

Националнăçсен Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ:

ССР Сойузĕнчи Совет писателĕсен Сойузĕн секретарĕ В. П. Ставский йулташ (Грозненск хула суйлав округĕ); Атăл çинчи Нимĕçсен АССР-чи Мариентал машинпа трактор станци директăрĕ, Ленин орденĕпе наградăланăскер, А. А. Денинг йулташ (Атăл çинчи Нимĕçсен АССР-чи Зелманов суйлав округĕ); Совет Сойузĕн Геройĕ А. В Лапидевский йулташ (Кабардино-Балкар АССР-чи Прохладненск суйлав округĕ); Хусанти Ленин йачĕпе тăракан йĕтĕн комбиначĕн фабком председателĕн заместителĕ ткачиха-стахановка Х. Т. Тухваттулина йулташ (Тутар АССР-чи Хусан хула суйлав округĕ.).

(ТАСС).

Сойуз Советне суйламали Мускаври Сталин суйлав округĕнче

Сойуз Советне суйламали Мускав хулинчи Сталин суйлав округĕнче суйлава вăйлăн хатĕрленеççĕ. Район совечĕсем пур 109 участкări суйлав комиççине те лайăх çуртсене вырнаçтарнă. Вăл çуртсене телефон кĕртнĕ. Сасăламали хăшпĕр пÿлĕмсене йĕркеленĕ те ĕнтĕ.

Пур участкăри комиççисем те ĕçе тытăннă. Участкăри суйлав комиççи членĕсемпе доверенăй çынсем суйлавçăсен спискисене хватерсем тăрăх çÿресе тĕрĕслеççĕ, ĕççыннине спискăсемпе паллаштарма участкăри суйлав комиççине чĕнеççĕ.

ПСК(б)П Сталин райкомĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласмайĕпе агитацилĕ-массăлă тата ăнлантару ĕçне анлăн сарса йанă. Сталин районĕнче 55 агитпункт йĕркеленĕ. Вăл пунктсенче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенипе паллаштаракан, Сталинла Конституцине кăтартса паракан пысăках мар выставкăсем пур. Районра халĕ кашни суйлав участкинчех агитаторсен канашлувĕсем тата коммуниссен пухувĕсем пыраççĕ.

ПСК(б) Партин Сталин райкомĕн парти кабинетĕнче „Совет строителстви" çинчен калакан выставкă организациленĕ. Йатарласа „депутат пÿлĕмĕ" йĕркеленĕ. Кунта нумай фотоÿкерчĕксемпе тата ăнлантаракан хутсемпе Сталин йулташ биографине кăтартса панă.

(ТАСС).

Пуйăссем çинчи агитаци

ХАРЬКОВ, нойабĕрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Харьков чукунçул узелĕнчи малта пыракан 150 чукунçул рабочине пуйăссем çинчи суйлав комиççине суйланă. Вĕсем инçе (Севастопол—Мускав, Шепетовка—Баку, Харьков—Горький т. ыт. те) çÿрекен пуйăссем çинчи суйлав комиççисенче ĕçлеççĕ. Вăл пуйăссем çинче çавнашкалах 200 таран пропагандис-агитаторсем ĕçлеççĕ.

Харьковра йĕркеленекен икĕ пуйăса (Харьков—Караганда тата Харьков—Горький) пăхса вĕренмели хатĕрсем, пĕчĕк библиотекăсем тата плакатсем параççĕ. Ку пуйăссем çинче суйлавсем йатарласа йĕркеленĕ вагонсем çинче иртеççĕ.

Йутçĕршыв рабочи делегацийĕсем ССР Сойузĕ тăрăх кайаççĕ

Совет Сойузне Октăбĕрти Социалисăмла аслă революци çирĕм çул тултарнине уйавлама килнĕ йутçĕршыв рабочи делегачĕсем Мускавра вунă кун ытла пулнă. Вăл вăхăтра вĕсем столицăпа, унăн реконструкципе, културăла йала строителствипе тĕплĕн паллашнă, музейсемпе театрсенче, предприйатисенче пулнă, стахановецсемпе тата профсойуз работникĕсемпе курса калаçнă.

Нойабĕрĕн 16 мĕшĕнче йутçĕршыв рабочи делегацийĕсем ССР Сойузĕ тăрăх тухса кайнă. Йутçĕршыв хăнисем Кийăвра, Харьковра, Дон-çи Ростовра, Бакура, Сочире, Кисловодскра, Донбасра тата Ленинградра пулаççĕ. ССР Сойузĕнче кашни делегаци икĕ ерне хушши çÿрет. Нойабĕр уйăхĕн вĕçĕнче йутçĕршыв хăнисем хăйсен тăван çĕршывĕсене тухса кайаççĕ.

(ТАСС).

Азербайджанри çĕрмамăкĕ акса тăвакансен чапла çитĕнÿвĕсем

БАКУ, нойабĕрĕн 16-мĕш. (ТАСС). Азербайджанри малта пыракан Касум-Измайлов районĕнчи çĕрмамăкĕ акса тăвакансем калама çук чаплă çитĕнÿсем тунă. Октăбĕр уйăхĕнчех Ворошилов йачĕпе тăракан колхозăн йатлă стахановецĕсем Басти Багировапа Манйа Керимова орденоносецсем хăйсен участкисем çинчи кашни гектартан 120 центнер çĕрмамăкĕ туса илнĕ. Ку республикăра çĕрмамăкне туса илме планпа палăртнинчен вунă-вунпĕр хут ытларах пулат.

Темиçе кун иртсен, пĕр гектартан çĕрçирĕм центнер çĕрмамăкĕ туса илекенсен ретне çĕнĕ çынсем хушăннă. Багирова йачĕпе тăракан колхозри Гусейн Новрузов стахановец икĕ гектарлă участкăра пĕр гектар çинче 132 центнер çĕрмамăкĕ туса илсе çĕнĕ рекорд тунă.

Суранов семйи тулли пурнăçпа пурăнат

КАНАШ. Кузьма Степанович Суранов Сиккассинчи Шмидт йачĕпе тăракан колхоз членĕ, 65 çулхи старик. Вăл пĕрремĕш бригадăри чаплă стахановец. Суранов тискер патша самани вăхăтĕнче чылай хĕн-хур курса ÿснĕ.

— Ĕлĕкхи иртнĕ пурнăçсене аса илсен чун çÿçенет,—тет вăл.

Кузьма мучин семйи ĕлĕкхи вăхăтра ытла та асаплă пурнăçпа нушаланса пурăннă. Ун семйинче 8 çын пулнă. Çав пысăк семйене Кузьма мучин пĕр йат çĕрпе тарантарса усрама тивнĕ. Ун чухне хĕрарăмсене çын вырăнне хуман, вĕсене çĕр те паман. Ачасем вака пулнă, ĕçлеме пултарайман.

Кулаксем чаплă çуртсенче пурăннă. Çав çуртсене вĕсем чухăнсене пусмăрласа ĕçлеттернипе туса лартнă. Суранов кулаксен ĕçĕнче тарçăра пайтах тар йухтарнă.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче Суранов семйинче калама çук пысăк улшăну пулчĕ. Колхоз йĕрки Кузьма мучийе пуйан та културлă пурнăç çулĕ çине кăларчĕ. Колхозра тÿрĕ, тăрăшса ĕçленĕ май тырпул та ытларах илет. Тырпул нумай илнипе хăйĕн хуçалăхне йусат, выльăх-чĕрлĕхсем усрама тытăнат. Халĕ унăн пĕр ĕне, тепĕр пăру, 9 сурах, чăх-чĕпсем те пур. Ĕлĕк çĕтĕк-çатăк çÿренĕ пулсан, халĕ вĕсем тумтир йенчен çителĕклĕ пурăнаççĕ.

60 çултан иртнĕ колхозниксене, ĕçлеме пултаракан çын çук пулсан, пур налогсенчен те хăтарасси çинчен партипе правителствă йышăннă постановленине вуласа парсан, Кузьма мучи çав тери хавасланнă. Колхозра пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçлет. Ĕçе лайăх та пахалăхлă тăват. Кăçал вăл, 65 çулта пулсан та, 225 ĕçкунĕ тунă. Арăмĕ те 65 çултан иртнĕ. Колă йатлă 15 çулхи ывăлĕ Сиккассинчи вăтам шкулта 8 мĕш класра вĕренет. Вĕсем кăçал 240 пăта йахăн тĕш тырă тата пахча-çимĕçсем те илеççĕ.

Пуйан та културлă пурнăç панăшăн стахановец Суранов партипе правителствăна, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа чĕререн тав тăват.

Ив. Малов.

Республикăла Испанин тинĕсри çар флочĕ.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: республика морйакĕсем судно порчĕ çинче.
(Сойузфото).

Шанхай фронтĕнчи вăйлă çапăçусем

Шанхайран хĕвеланăçнеле тата кăнтăр хĕвеланăçнеле, Шанхай—Нанкин тата Шанхай—Ханчжоу чукунçулĕсем тăрăх вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Йапони пĕлтерÿвĕсем тăрăх, Йапони чаçĕсем Шанхай—Нанкин чукунçулĕ çинчи Куншаң йатлă пысăк станцийе тытса илнĕ.

Китай çарĕсен тĕп вăйĕсем, Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр йенче ларакан Фуршаң хулинчен пуçласа Ханчжоу заливĕ хĕрринчи Чжапу хули таран тăсăлнă лини çинчи позицире çирĕпленеççĕ.

Йулашки икĕ кун хушшинче Шанхайа Йапонин вунпĕр çар транспорчĕ пынă. Вăл транспортсемпе вунă пин Йапони салтакĕ, нумай çар хатĕрĕсем, вăл шутрах танксем, бронлă автомобилсем тата йăвăр артиллери илсе пынă.

(ТАСС).

ТЕМТЕПĔР

Шывра шывпа çутатакан хунар

Йулашки вăхăтра шыв çинче çĕрле çутатмали çĕнĕ хунар шутласа кăларнă. Хунар çинче 2 електрод (цинил тата кăмрăк пластинкисем) пур. Шывра путасран тăхăнмалиункă çумне çирĕплетнĕ хунарăн пластинкисем тинĕсри тăварлă шыва лексен галваникăлă елемент пек електричествă токĕ кăлараççĕ. Çак ток вара лампăна çутатса тăрат.

Тинĕсри тăварлă шывпа пулакан електричествă токĕпе хунар темиçе талăк çунса тăма пултарат. Кун пек хунарсем тинĕсри пароходсем путнă хыççăн çынсене çĕрле шыраса тупма пулăшаççĕ.

(„Техника—молодежи").

* * *

Шăвармали шыв тĕсĕ

Женевăри йалхуçалăх станцин директăрĕ доктор Мур çимĕçсене шăваракан шывăн тĕсĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине тĕпчесе пĕлнĕ. Д-р Мур опычĕсенчен çакă палăрнă: çимĕçсене сутă шывпа шăварсан, ун çине сийенлĕ хурткăпшанкăсем ытларах çыпăçаççĕ. Ку вăл шыв тумламĕсем çине ÿкекен çутă пайăркисем ытларах хуçăлнинчен килет. Тĕксĕм тĕслĕ шывпа шăварсан ун пек мар. Çавăнпа та çимĕçсене шăвармали шыва порошок йарса тĕсне хуратмала. Ун пек тусан сăтăр кÿрекен хурткăпшанкăсем çимĕç çине сахатарах çыпçăнаççĕ.

(„Наука и жизнь").

* * *

Шлепке çинчи пироскоп

Шлепке çине лартмали пироскоп спорт ăмăртувĕсене курма лайăх пулăшат. Пироскопа икĕ куçкĕскинчен тăваççĕ, пĕрне шлепке çине лартаççĕ, теприне —куç умне.

Çакăн пек пироскоппа халăх хушшинче тăнă çĕртех, куçкĕски çине ÿкекен сăн тăрăх спорт вăййисене пăхса тăма пулат.

(„Техника—молодежи").

* * *

Закусăчнăй-автомат

Октăбĕр праçникĕ вăхăтĕнче Мускавра 44 закусăчнăй-автомат уçнă. Тăвата кун хушшинче çав закусăчнăйсенче 85 пин çын апат çисе тухнă.

Автоматсене пурне те çĕнĕ конструкципе тунă. Вĕсем 4—5 секунд хушшинче тĕрĕс порцисемпе бутербротсем, кондитерски таварсем парса тăраççĕ. Автоматри хатĕрлемели ĕçсене пурне те механизациленĕ. Закусăчнăй-автомат пÿлĕмĕсен ăшне Крым тата Урал мрамăрĕсемпе витнĕ.

(„Горьковская Коммуна").

14.116 пукан тунă

Çĕмĕрле комбиначĕн столярнăй цехĕ октăбĕр уйăхĕнче 14.116 пуканпа 1.346 сĕтел туса кăларса, плана ытлашшипех пурнăçа кĕртнĕ.

Çаван пекех цех октăбер уйăхĕнче 1054 шкаф вырăнне 1146 шкаф туса, плана 100,7 процент тултарнă.

Столярнăй цех продукци кăларас плана октăбĕрте 114,8 процент тултарнă. (Хамăр инф.).

Извещение

На заседание комиссии по приему и исключению из рядов комсомола при Чувашском ОК ВЛКСМ к 10-и часам утра на 21 ноября 1937 г. в г. Чебоксары (улица Карла Маркса, дом № 13) для участия в разборе поданных апелляций ВЫЗЫВАЮТСЯ:

1. ПРИВАЛОВ Иван Михайлович — Гор. Чебоксары, Кооптехникум.
2. ТРЕПНЕВ Степан Христофорович — Гор. Чебоксары, ВКСХШ.
3. НАУМЕНКО Димитрий Савастьянов — Гор. Чебоксары, Кооптехникум.
4. ВЕРШКОВСКИЙ Р. В. — Гор. Чебоксары, Радиокомитет.
5. ГАВРИЛОВ И. Г.—дер. Шималаково, Урмарского р-на.
6. ВАСИЛЬЕВА Елена Сильвестровна —Старо-Урмарская НСШ, Урмарского р-на.
7. КОНСТАНТИНОВ А. К. — дер. Хоруй, Урмарского р-на.
8. ИЛЬИЧЕВ Д. И. — Гор. Алатырь
9. СУНГАТУЛЛИН А. М. — дер. Иш-Суринск, Шихирдановск. р-на.
10. СИМЕРХАНОВ Гадельзян — дер. Тат-Шуруты, Шихирдановск. р-на.
11. ИВАНОВА Нина Ивановна — Гор. Цивильск, Педучилище.
12. РУСАКОВ Анатолий Сидорович — дер. Юваново, средняя школа, Татаркасинского р-на.
13. ВОЛКОВ А. И. — дер. Сидуково, Татаркассинского р-на.
14. БЕРДНИКОВ П. П.— Кувакинский район.
15. СЕДОЙКИН И. А. — Мар-Посад, Райисполком.
16. ФРОЛОВ И. В. — д. Трех-Болтаево, Шемуршинск. р-на.
17. КРАСНОВ П. К. — д. Иваново, Янтиковского р-на.
18. АНДРЕЕВ А. И.—д. Сикассы, Канашского р-на.
19. ПЕТРОВ — Янтиково, РОНО.
20. ЧИРКОВА А. — Гор. Чебоксары.

Райкомы комсомола должны выслать в Обком комсомола своих представителей и обеспечить обязательную явку вызываемых лиц к указанному сроку.

Путевые расходы ОБКОМОМ оплачиваться не будут.

Комиссия по приему и исключению из рядов комсомола при Чуваш. ОК ВЛКСМ.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Конторă валли уйрăм пÿлĕм тата специалиссем валли ХВАТЕРСЕМ кирлĕ.
Хак килĕшÿ тăрăх.
Çак адрĕспа пĕлтермеле: Урицкайа урамĕ, 13, Чăвашмелтрест. Телефон № 4—16 йе 2—16.
3—1

Шупашкарти „Красный мебельщик" ертелне СДЕЛНĂ ĔÇЛЕМЕ столярсем кирлĕ.
3—2 Правлени.

Профдвижени шкулне ОПЫТЛĂ СЕКРЕТАР-МАШИНИСТКĂ тата БИБЛИОТЕКАР кирлĕ.
Çак адрĕспа пĕлтермеле: Шупашкар, Плеханов урамĕ, 25.
ДИРЕКЦИ.

Промкоопераци системин бухгалтери учочĕ ĕçĕсене пĕлекенсем 4 бухгалтер-ревизор васкавлă кирлĕ.
Условисемпе паллашма çак адрĕспа пымала: Шупашкар, Кадыков урамĕ, 7—9. Телефон № 3-22.
3—2 Чăвашкулпромсойуз.

„Чăваш Коммунĕ" сыранса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.
Уполномоченный Чувашглавлита № 866. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13964. 58—92 см. 1—1 п. л.